**А.А. Ядрицова, И.В. Ядранская**

# ЧӐВАШ ЛИТЕРАТУРИ

**Вырӑс шкулӗн**
**7-мӗш класӗ валли**

# Йышăннă паллăсем:

 — хăвăра тĕрĕслĕр (проверьте себя)

 — ыйтусемпе ĕçсем (вопросы и задания)

 — кăткăс ыйтусемпе ĕçсем (вопросы и задания повышенной сложности)

 — итлев-тăнлав (фонохрестоматия)

 — илемлĕ вулама хăнăхатпăр (учимся читать выразительно)

 — литература теорийĕ (теория литературы)

 — ÿнер тата сăмах тĕнчи (изобразительное искусство и литература)

 — культурăсен çыхăнăвĕ (диалог культур)

 — пултарулăх ĕçĕ (е проект) (творческое задание (или проект))

 — словарь ĕçĕ (словарная работа)

 — халăх ăс-хакăлĕ (народная мудрость)

**Чăваш литератури:** Вĕренÿпе вулав кĕнеки. 7-мĕш класс валли / А.А. Ядрицова, И.В. Ядранская çырса-пухса хатĕрленĕ. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2019. — … с.

Вĕренÿпе кĕнекине пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вĕренÿ организацийĕсенче усă курма Федерацин патшалăх вĕренÿ стандарчĕпе килĕшÿллĕн хатĕрленĕ.

# ХАЛĂХ СĂМАХЛĂХĔ — УСТНОЕ НАРОДНОЕ ТВОРЧЕСТВО

## ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ — НАРОДНЫЕ СКАЗКИ

Юмахсем тени *юм, юмлас* сăмахсенчен пулнă. *Юм* тени *асамлă* тенине пĕлтерет.

**Сказка** — один из жанров фольклора, либо литературы. Эпическое, преимущественно прозаическое произведение волшебного, героического или бытового характера.

**Юмах** — халăх хушшинче сăмах вĕççĕн çӳрекен асамлă, тĕлĕнмелле ĕçсем çинчен калакан хайлав.

Юмахсем ĕлĕк-авалах пуçланса кайнă. Вĕсем халăх пурнăçĕпе таччăн çыхăнса аталанса пынă. Ĕлĕк этем çут çанталăкри вăйсемпе пулăмсем (хĕвел, уйăх, çăлтăрсем, аслати, çиçĕм, шыв, сăрт-ту) мĕнле пулса кайнине ăнланасшăн пулнă. Сăмахран, сăрт-ту хăйĕн кӳлепипе калама çук пысăк çын пек туйăннă. Ăна, паттăрпа танлаштарса, Улăп тесе ят панă. Улăп паттăрсем çинчен тĕрлĕрен халап-юмахсем хывнă. Е пĕр-пĕр çын ăнсăртран шыва путса вилсен, ăна вутăш илсе каять тесе шутланă. Тепри сĕм вăрманта çухалса кайсан, ăна Арçури ӑташтарса ярать тесе ĕненнĕ. Кусем çинчен те юмах-халапсенче каласа панă.

**Сказ** — вид литературно-художественного повествования, подражающий фольклорным произведениям стилем, специфической интонацией и стилизацией речи для воспроизведения речи сказителя устных народных жанров или живой простонародной речи вообще.

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕн вăл юмах?
2. *«Юмах»* мĕнле сăмахсенчен пулнă?
3. *«Асамлă»* сăмах вырăсла мĕнле пулать-ши?
4. Сăрт-тăва чăвашсем мĕнпе танлаштарнă? Ăна мĕншĕн Улăп тесе ят панă?
5. Юмахсем халăх пурнăçĕпе мĕнлерех çыхăнса аталанса пынă?
6. Чăваш халăхĕ *вутăш, арçури* çинчен юмах-халапсенче мĕн каласа панă-ши?

## ЧЕЕ ТАКАСЕМ

*Чĕр чунсем çинчен калакан (янавар) чăваш халăх юмахĕ*

Кукăр-макăр варсем тăрăх пысăк сурăх кĕтĕвĕ çӳренĕ. Çав кĕтӳре тĕкĕшме юратакан икĕ така пулнă. Вĕсем пĕр-пĕринпе çапăçакан айван ачасем пекех тĕкĕшме юратнă.

Пĕррехинче кĕтӳçĕ асăрхайман та, çаксем пĕр кĕтесе тăрса юлнă. Вара вăрмана кайнă та аташса çӳренĕ.

Каç пулсан сивĕтнĕ те, вĕсем шăнасран шанкă пуçтарса кăвайт хунă. Çутта курса Кашкăр чупса пынă та çапă купи хыçне пытанса ларнă. «Кусем мĕн калаçаççĕ-ха?» — тесе итлеме тытăннă.

Такасем Кашкăр пынине сиснĕ те ăна улталама шухăш тытнă. Пĕри çапă патне каять, тепри ăна калать:

— Манăн çиес килет — çук-и унта мĕнле те пулин тăмсай Кашкăр?

Тепри хирĕç калать:

— Эпĕ халĕ кăна çичĕ кашкăр çирĕм те, сан валли юлчĕ-ши вара?

Çапла калаçнине Кашкăр илтет те питĕ хăраса каять, хăяккăн каялла чакса çапă купи хыçĕнчен сиксе тухать те вăшт кăна вĕçтерет.

Таракан Кашкăра Упа курать те ун хыçĕнчен ыткăнать. Кашкăр хӳрине лăпчăтса Упапа каварлашма шутлать:

— Ан чуп, тархасшăн, ман хыçран. Ак эпĕ икĕ самăр така куртăм, пĕри вĕсенчен: «Çичĕ кашкăр çирĕм», — тет. Вăт çавсене тытса çисен иксĕмĕр те тутă пулăттăмăр.

Упа Кашкăра итленĕ, иккĕшĕ те такасем кăвайт хунă çĕре кайнă. Çав вăхăтра такасем шыв хĕррине çитнĕ те пĕр ватă йывăç тăррине улăхса ларнă. Упа кăвайт патĕнче такасем çуккине курать те Кашкăра калать:

— Сана хăвна çиетĕп, мĕншĕн мана улталарăн?

— Чим-ха, малтан такасем ăçта кайнине пăхар-ха, — тет Кашкăр Упана.

Ак ĕнтĕ вĕсем йĕр тăрăх йĕрлесе шыв хĕррине çитеççĕ те йывăç патĕнче чарăнаççĕ.

— Ак йĕрсем те çухалчĕç. Вĕсем сулăпа ларса кайнă. Санах çиме лекет, — тет Упа.

Кашкăр хăранипе чĕтресе пĕшкĕнсе шывалла пăхать те унта такасен ĕмĕлкисене курах каять. Вара савăнса Упана калать:

— Ав куратăн-и, вĕсем шыва кĕрсе ларнă.

Упа такасен ĕмĕлкисене курсанах шывалла шампăрт! сикет. Ун хыççăн — Кашкăр та. Вĕсем иккĕшĕ те шыва путса вилеççĕ.



## Словарь ĕçĕ

**кукăр-макăр варсем тăрăх** — по извилистым оврагам

**тĕкĕшме юратакан икĕ така** — два барана, любящие бодаться

**çапăçакан айван ачасем пек** — как дерущиеся глупые дети

**инкек** — беда

**шанкă пуçтарса кăвайт хунă** — собрали хворост и разожгли костёр

**çук-и унта мĕнле те пулин тăмсай кашкăр** — нет ли там какого-нибудь глупого Волка

**питĕ хăраса каять** — очень испугался

**ватă йывăç тăррине улăхса ларнă** — забрались на старое дерево

**мĕншĕн мана улталарăн** — почему обманул меня

**йĕр тăрăх йĕрлесе шыв хĕррине çитеççĕ** — по следам дошли до берега реки

**хăранипе чĕтресе** — дрожать от испуга

**пĕшкĕнсе шывалла пăхать** — нагнувшись посмотрел на воду (реку)

**унта такасен ĕмĕлкисене курах каять** — увидел тень (силуеты) баранов

**шывалла шампăрт! сикет** — бултых в реку (с шумом прыгает в реку)

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Ку юмах мӗн ҫинчен тенӗ? Вӑл мӗнле пуҫланать?
2. Кӗтӳре мӗнле такасем пулнӑ? Вӗсем мӗн тума юратнӑ?
3. Такасем мӗнле инкеке лекнӗ?
4. Такасем Кашкӑра мӗнле улталама шут тытнӑ? Ҫав вырӑна тупса вулӑр.
5. Юмах мӗнле вӗҫленет?
6. Юмахра пурӗ миҫе сӑнар? Вӗсене кашнине сӑнласа парӑр. Такасем мӗнлерех? Кашкӑр мӗнлерех? Упана мӗнле сӑнланӑ? Хӑвӑрӑн шухӑшӑра юмахри йӗркесемпе ҫирӗплетӗр?

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

1. Юмахри Такасене, Кашкӑрпа Упана мӗнлерех ҫынпа танлаштарма пулать-ши? Ӑнлантарӑр.
2. Хӑвӑр пӗлекен халӑх юмахӗсене аса илӗр. Вӗсенче сӑнарсем чӗр чунсем-и? Е ҫынсем-и?

## Пултарулӑх ӗҫӗ

Пӗр-пӗр чӗр чун пурнӑҫӗ ҫинчен пысӑках мар юмах ҫырӑр. Юмаха ят парӑр.

## Халӑх ӑс-хакӑлӗ

Тупмалли юмахсен тупсӑмӗсене пӗлӗр.

1. *Хӗлле шурӑ, ҫулла сӑрӑ.*
2. *Пӗр ҫӑмхана пин йӗп чикнӗ.*
3. *Йывӑҫ тӑрӑх сиккелет ҫӑмламас чӗр чун, кӑмпа, мӑйӑр пуҫтарать, ҫак хитре чӗр чун.*

# ПĔЛĔВЕ СУТĂН ИЛЕЙМĔН — ЗНАНИЕ ЗА ДЕНЬГИ НЕ КУПИШЬ

## Юхма Мишши
## (1936)



***Юхма Мишши* (*Михаил Николаевич Ильин*)** *— чăваш халăх çыравçи, историкĕ. Вăл шкулта, Чăваш кĕнеке издательствинче, «Вучах» хаçат редакторĕнче вăй хунă. Юхма Мишши прозăра кăна мар, поэзире, драматургире те тивĕçлĕ ĕçленĕ. Унăн сăввисемпе чăваш композиторĕсем юрăсем хывнă. Çавăн пекех вăл юптарусем те чылай çырнă. Юхма Мишши А.Г. Николаев космонавт тата Митта Васлейĕ ячĕпе хисепленекен премисен лауреачĕ. Çыравçăн паллă произведенийĕсем: «Оксана» повесть, «Мускав çулĕ» (Дорога на Москву), «Еткер» (Наследие), «Кăвак çĕмрен» (Голубая стрела) романсем. Юхма Мишши хăйĕн хайлавĕсенче чăваш халăхĕн паянхи тата иртнĕ пурнăçне, çут çанталăкăн илемлĕхне çырса кăтартнă.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Юхма Мишшин пултарулăхĕ хăш-хăш жанрсенче палăрнă?
2. Çыравçăн паллăрах произведенийĕсене калăр.

## ЫЛТĂН КĔНЕКЕ
*Тĕрленчĕк*

«Чăваш кĕнекине ĕне çинĕ», — тенĕ ĕлĕк. Мĕне пĕлтерет-ха çакă? Ку вăл ĕлĕк-авал чăвашсен хăйсен çырулăхĕ пулнине, анчах тискер саманара ăна çухатнине пĕлтерет теççĕ тĕпчевçĕсем.

Чăнах та, пĕр халапра ĕлĕк-авал чăвашсем Ылтăн кĕнеке пулни çинчен каланă. Тискер тăшмансем тапăнсан, ăна çĕр айне пытарса хунă, тет. «Пайтах вăхăт иртсен, Чăваш çĕрĕнче паттăр çуралать, çавă пирĕн Ылтăн кĕнекене шыраса тупать те халăха тавăрса парать», — тенĕ.

Чăваш халăхĕн Ылтăн кĕнекине тупаканни вăл — Иван Яковлевич Яковлев, пирĕн мухтавлă çутта кăлараканăмăр.

Вăл 1868 çулта Чĕмпĕрте Чăваш шкулне уçнă, кайран чăваш çырулăхне тунă, чăвашсен малтанхи кĕнекине, «Чăваш букварьне», çырса хатĕрленĕ.

Çакă «Чăваш букварĕ» ĕнтĕ пирĕн халăхăн Ылтăн кĕнеки.

### Словарь ĕçĕ

**чăваш кĕнекине ĕне çинĕ** — чувашскую книгу съела корова
**çырулăх** — письменность
**çĕр айне пытарса хунă** — закопали в землю
**пайтах вăхăт иртсен** — через продолжительное время
**паттăр çуралать** — родится богатырь
**шыраса тупать** — разыщет
**халăха тавăрса парать** — вернёт народу

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Ĕлĕк чăваш кĕнеки пирки мĕншĕн *«чăваш кĕнекине ĕне çинĕ»* тесе каланă? Тупса вулăр.
2. Чăваш халăхĕ хăйĕн Ылтăн кĕнекине кам тупасса шаннă?
3. Ылтăн кĕнекене кам тупнă? Мĕнле майпа?
4. Мĕншĕн И.Я.Яковлев букварĕ пирĕн халăхăн «Ылтăн кĕнеки» шутланать?
5. И.Я. Яковлев çинчен эсир мĕн пĕлетĕр? Кластер туса хуравлăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Ĕлĕк-авал чăвашсен мĕнле çырулăх пулнă-ши? Эсир çав çырулăх çинчен мĕн илтнĕ?
2. Руна çырулăхне (руническая письменность) паянхи кун ăçта курма пулать?

**Зарисовка (заметка)** — краткая запись о чём-либо.

**Тĕрленчĕк** — пĕр-пĕр ĕç е çул çӳревре курни çинчен кĕскен, сăнарлă çырса кăтартни.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахĕсен тӳр килĕвĕсене тупăр, пăхмасăр калама вĕренĕр.*

1. Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен.
2. Вĕрентсен упа та ташлама вĕренет.
3. Вĕренни — çутă, вĕренменни — тĕттĕм.
4. Вĕренни мулран хаклă.
5. Ăса ĕмĕрпе пухаççĕ.
6. Ĕçпе вĕренӳ юнашар пыраççĕ.

а. Научить — и медведь научиться танцевать.
ă. Жить да быть — ума копить.
б. Труд и ученье — всегда рядом.
в. Ум — сокровище человека.
г. Век живи, век учись.
д. Ученье — свет, неученье — тьма.

## Пултарулăх ĕçĕ

*Ыйтусемпе усă курса «И.Я. Яковлев — чăваш халăхне çутта кăлараканĕ» ятлă кĕске текст тăвăр.*

1. Кам вăл Иван Яковлев? Вăл хăш хулара чăваш шкулне никĕсленĕ?
2. Ку шкулта хăш халăх ачисем вĕреннĕ?
3. Вăл никĕсленĕ шкултан мĕнле паллă чăваш çыравçисем вĕренсе тухнă?
4. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ачасене мĕнле-мĕнле ĕçе вĕрентнĕ?

5. И. Яковлев куçару ĕçĕпе ĕçленĕ-и? Мĕн куçарнă? Çак ĕçе хăйĕн вĕренекенĕсене явăçтарнă-ши?

## Василий Петров
## (1939)



***Василий Петрович Петров*** *— паллă прозаик, ăста публицист, очеркист, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Вăл Казахстанта кирпĕч хуракан пулнă, «Коммунизм ялавĕ», «Çамрăк коммунист», «Пионер сасси» тата «Советская Чувашия» хаçатсенче, «Ялав» журналта ĕçленĕ. Малтанхи литература хайлавĕсене «Пионер сасси» хаçатра пичетлесе кăларнă. Вăл 10 ытла кĕнеке авторĕ. Çыравçăн паллăрах кĕнекисем: «Кĕрхи тăман» (Осенняя метель), «Салтак сăн ÿкерчĕкĕ» (Портрет солдата), «Улăппа шăши» (Улып и мышь), «Хăнасем» (Гости), «Хурăн çути», (Березовый свет) «Чун ăшши» (Тепло души), «Кукамай» (Кугамай).*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Василий Петровăн малтанхи хайлавĕсене хăш хаçатра пичетлесе кăларнă?
2. Çыравçă миçе кĕнеке авторĕ? Унăн паллăрах кĕнекисене калăр.

## ĂС-ТĂН ПУЯНЛĂХĔ
*Тĕрленчĕк*

Пурнăçри кулленхи тимлĕх, канăçсăрлăх, пурне те пĕлме тăрăшни паха та пысăк пĕлÿ парать! Ху валли кашни кун мĕн те пулин çĕнни шыраса тупма пултаратăн. Пĕр япала кăна кирлĕ сана — кăсăклану.

Мĕн-ши вăл кăсăклану? Мĕн пĕлнипе лăпланса ларманни. Пĕлÿ ытларах илес тесе тăрăшни. Çаксем ăс-хакăла та, шухăш-кăмăла та пуянлатма пултараççĕ. Ăс-тăн пуянлăхĕ этемшĕн питĕ хаклă.

Чăваш халăх сăмахлăхĕнче çакăн пек халап пур.

Пĕр çыннăн виçĕ ывăл пулнă. Вĕсенчен ашшĕ: «Кама мĕн кирлĕ: ăс-и, укçа-и?» — тесе ыйтать.

Икĕ аслă ывăлĕ ашшĕнчен укçа ыйтса юлаççĕ. Чи кĕçĕн ачи ăс ыйтать.

Ашшĕ вилет. Укçа ыйтса юлнисем ăспа пурăнма пĕлмеççĕ: мĕн пур укçине салатса пĕтереççĕ те çука юлаççĕ. Кĕçĕн ывăлĕ ăспа пурăнса халĕ те аван пурăнать тет.

Чăн та, чăваш халăхĕ этем ăс-тăнне мĕн авалтан пысăк пуянлăх тесе хаклană.

### Словарь ĕçĕ

**кăсăклану** — любопытство, интерес, увлечение

**канăçсăрлăх** — беспокойство, тревога, волнение

**ăс-хакăл** — разум, интеллект

**тимлĕх** — 1. старание, усердие, 2. настойчивость, инициативность; 3. внимательность, внимание, сосредоточенность
**шухăш-кăмăл** — 1. умонастроение *книжн.* 2. настроение расположение духа настрой *разг.*
**халăх сăмахлăхĕ** — устное народное творчество, фольклор
**укçа ыйт** — просить денег
**ăс ыйт** — просить разум (ум)
**пурне те пĕлме тăрăшни** — желание (стремление) узнать больше
**мĕн авалтан** — издревле
**пысăк пуянлăх** — большое богатство
**халап** — сказка, басня, вымысел, легенда

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕн вăл кăсăклану? Çынна вăл мĕн тума кирлĕ?
2. Ăс-хакăлпа шухăш-кăмăла пуянлатма мĕн пулăшать?
3. Тĕрленчĕкри халапа тупса вуласа парăр. Вăл мĕн çинчен?
4. Чăваш халапĕнчи икĕ аслă ывăл мĕншĕн çука тăрса юлнă? Кĕçĕн ывăлĕ мĕншĕн аван пурăннă?
5. Ăс-тăн пуянлăхĕ этемшĕн мĕншĕн хаклă?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Тĕрленчĕкре автор мĕнле çивĕч ыйту (проблема) хускатать?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр.*

1. Ăс-тăна мĕн … пухас пулать.
2. Вĕрентекен пур чухне … юл.
3. Пĕлни … лайăхрах.
4. Ача чух … ĕмĕрлĕх.
5. Вĕрентсен упа та … вĕренет.

## Пултарулăх ĕçĕ

Вуланă тĕрленчĕкпе усă курса «Вĕренни мулран хаклă» темăпа пысăках мар тĕрленчĕк çырăр.

# КĔРХИ ÇАНТАЛĂКĂН КĂМĂЛĔ ХУÇĂК — ОСЕНЬ – ПОГОДЫ ПЕРЕМЕН ВОСЕМЬ

**Митта Васлейĕ**
**(1908-1954)**



***Митта Васлейĕ (Василий Егорович Митта)*** *— чăваш сăвăçи, çыравçи, тăлмач. Ялти (Аслă Арапусĕнчи) шкултан вĕренсе тухсан Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Унта вĕреннĕ чухнех литературăпа кăсăкланнă. Хутарти колхоз çамрăкĕсен шкулĕн директорĕ, Патăрьел район хаçачĕн яваплă секретарĕ пулнă. Каярахпа Шупашкарта хаçат-журналта, радиора ĕçленĕ. А. Пушкин, М. Горький, С. Есенин, Н. Островский тата ытти çыравçăсен хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Паллă произведенийĕсем: «Тайăр» сăвăсен ярăмĕ, «Пит маттур-çке Иванов бульварĕ…», «Тăван чĕлхем» сăвăсем. Митта Васлейĕ хăйĕн хайлавĕсенче чăваш халăхĕн чĕлхипе культурин проблемисене хускатнă.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Митта Васлейĕн пултарулăхĕ хăш-хăш жанрсенче палăрнă?
2. Вăл камăн-камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?

## КĔРХИ ИЛЕМ

Кĕрхи сăнарăн пур ĕлккенлĕх,
Чуна кайса тивен илем.
Çунаççĕ çулçăсем хĕлхемлĕн,
Вĕçсе иртеççĕ кайăксем.
Пăлан пек ĕнесем çÿреççĕ
Тĕтреллĕ çарансем çинче.
Хĕвелĕн пичĕ пĕчĕкçеççĕ
Ирхи тĕтрелĕх хыçĕнче.

Йĕтемсенче çапаççĕ авăн,
Ĕç шавĕ хăлхаран каймасть.
Пахча тулли арбуз та кавăн —
Кĕр мăнтăрне ут туртаймасть.
Саламлă, савăнăçлă, ĕлккенлĕ
Ик куç тулли кĕрхи илем…
Анчах та темшĕн, тем хĕрхеннĕн
Кăшт ассăн сывласа илен?

## Словарь ĕçĕ

**ĕлккенлĕх** — 1. красота, нарядность; 2. роскошь, шик; *разг.*, довольство
**йĕтем** — ток, гумно
**çунаççĕ çулçăсем хĕлхемлĕн** — искрятся листья
**ĕç шавĕ** — рабочий шум
**кĕр мăнтăрне ут туртаймасть** — осеннее изобилие не потянет (не сможет повезти) даже лошадь
**ик куç тулли** — ненаглядный (*букв.* заполняющий взор)

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Сăввăн темине палăртăр?

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Сăвăра кӗркуннен хăш тапхăрӗ сăнланнă? Кӗр пуҫламăшӗ-и? Кӗр вӗҫӗ-и? Мӗншӗн ҫапла шутлатăр?
2. Кӗрхи илеме автор мӗнле сăнланă? Тупса вулăр. Ҫак йӗркесем мӗнле кăмăл-туйăм ҫуратаҫҫӗ?
3. Ҫанталăк ылтăн кӗркуннере мӗнле улшăнать?
4. Ӗҫ ҫинчен сăвăра мӗн ҫырнă? Тупса вулăр.
5. Кӗр тулăх пулни сăввăн хăш йӗркисенче палăрать? Тупса вулăр. Ҫак йӗркесене хăвăр сăмахăрсемпе ăнлантарăр.
6. *«Хӗвелӗн пичӗ пӗчӗкҫеҫҫӗ*
   *Ирхи тӗтрелӗх хыҫӗнче»,* — сăвă йӗркисене мӗнле ăнланатăр?
7. Сăввăн юлашки йӗркисене тепӗр хут вулăр. Вӗсем мӗнле туйăм ҫуратаҫҫӗ? Автор ҫак йӗркесемпе мӗн каласшăн пулнă-ши?

## Илемлӗ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Илемлӗ вулама вӗренӗр.

## Культурăсен ҫыхăнăвӗ

Митта Ваҫлейӗн «Кӗрхи илем» сăввине Федор Тютчевăн «Есть в осени первоначальной» сăввипе танлаштарăр, пӗр пеклӗхпе уйрăмлăхсем тупса палăртăр.

**Есть в осени первоначальной**

Есть в осени первоначальной
Короткая, но дивная пора —
Весь день стоит как бы хрустальный,
И лучезарны вечера…
Где бодрый серп гулял и падал колос,
Теперь уж пусто всё — простор везде, —
Лишь паутины тонкий волос
Блестит на праздной борозде.
Пустеет воздух, птиц не слышно боле,
Но далеко ещё до первых зимних бурь —
И льётся чистая и тёплая лазурь
На отдыхающее поле…

*Ф. Тютчев*

## Халăх ăс-хакăлӗ

*Ваттисен сăмахӗсене вӗҫлӗр:*

1. Кӗр мăнтăр, ...
2. Кӗрхи пуян — ...
3. Кӗр пуҫтарать, ...
4. Кӗркунне ҫерҫи те ...
5. Кӗркунне — какай, ...

## Георгий Орлов
## (1925 – 2007)

***Георгий Орлов (Егор Федорович Орлов)*** *— чăваш поэчӗ, прозаикӗ, куҫаруҫи. Вăл Иккассинчи вăтам шкулта, партин аслă шкулӗнче пӗлӳ пухнă. Ҫар училищин политика ӗҫӗнче, «Ялав» журнал литсотрудникӗнче, тӗп редакторӗнче, Чăваш кӗнеке*



*издательствин тĕп редакторĕнче вăй хунă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă. Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ. Паллă произведенийĕсем: «Çуралнă кил» (Отчий дом), «Экзамен», «Вилĕмрен те вăйлăрах» (Сильнее смерти), «Белоруссри çилĕсем» (Ветры Белоруссии), «Кӳршĕ» (Сосед) поэмăсем. Сăвăçă хăйĕн хайлавĕсенче пурнăç, çут çанталăк илемĕ çинчен, иртнĕ вăрçăра пирĕн халăхăн паттăрлăхĕ çинчен çырнă.*



## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Георгий Орловăн пултарулăхĕ хăш-хăш жанрсенче палăрнă?
2. Вăл мĕнле премие тивĕç пулнă?

## АВĂН

*Калав*

Авăн уйăхĕ тăрать. Пирĕн тавралăх ăна кĕр тырри акса хăварнă вĕçĕ-хĕррисĕр анасемпе, улмисем йывăррине пула тураттисене уснă улмуççисемпе, сип-симĕс каюллă улăх-çаранпа, тĕл-тĕллĕн шупкалнă-хĕрелнĕ ката-вăрманпа кĕтсе илет.

Çанталăк самаях уçă. Хĕвеллĕ, лăпкă, кăмăллă кунсен вăхăчĕ те иртмен-ха. Шыв сивĕнсех çитеймен. Хăш-пĕр çул шыва кĕрекенсен йышĕ авăн варринчех пĕве-кӳлĕ хĕрринчен хăпма пĕлмест. «Вăтам» авăн тăхăр кун çеç уçăрах пулмалла, ытти чух кăнтăрла кĕпе вĕççĕн çӳремеллех ăшă тăмалла.

Уяр та тӳлек кунсем сентябрьте уйрăмах илемлĕ пек. Тавралăх инçе-инçе курăнать. Пур çĕрте те татăлса-таткаланса пĕтнĕ эрешмен картисем вылянса ялтăраççĕ. Садсенче юлашки улмасем йăмăхаççĕ, хĕрелсе, йывăрланса кайнă пилеш сапакисем те хĕвел питтинче шăранакан кăвар евĕрех çиçсе чуна илĕртеççĕ. Тӳпе тап-таса, яр уçă. Çил çукпа пĕрех. Ăшă-ăшă. Çу тепĕр хут килнĕнех туйăнать. Тăри те сас памасăр чăтаймасть, çуркуннехи чухнех савăккăн мар пулин те юрласа ярать.

Вăрман саралса-хăмăрлансах пырса çаралнăçемĕн çаралать. Чи малтан хурама, çĕмĕрт, çăка çулçă тăкса пĕтереççĕ. Уйăх вĕçнелле юман тумĕ те таткаланма тытăнать.

Кăмпа августри пекех нумай мар та, тухать-ха. Вăйлă тăм хыççăн тин чылайăшĕ пачах курăнми пулать. Çанталăк йĕпене кайсассăн тунката кăмпи нумай тупăнать.

Хурăнсемпе чăрăшсен айĕнче, нӳрĕрех вырăнта, хăртнăсенче кăвак çырла кăвакарать. Анчах ăна та ирĕлсе-ванса ан пĕттĕр тесессĕн типĕ çанталăкра кăна татма юрать. Ун чух та тĕммине хуçасран, ватасран хытă сыхланас пулать, мĕншĕн тесен вăл питĕ вăрах çитĕнет, чипер упрасассăн виç çĕр çула яхăнах ларать.

Уйсенче хĕрӳ ĕç шавĕ чакнăçемĕн чакать. Уйăх пуçламăшĕнчех кĕр тыррисене акса пĕтереççĕ, çĕр улми кăларма тытăнаççĕ, çĕртме сухине

пĕтересшĕн тăрăшаççĕ. Çав ĕçсенчен пушаннă хыççăн тин ĕшеннĕ çĕр уçă çумăрсемпе çăвăнса тасалса канма выртать.

Вĕçен кайăксем тахçанах пысăк ушкăнсене пĕрлешнĕ. Ăшă çĕр-шывсене кайма хатĕрленнĕ май вĕсем инçерен инçе вĕçсе-çаврăнса çӳреççĕ. Кăсăясем юпа уйăхĕччен вăрмантан ял-хулана таврăнма пуçлаççĕ.

Авăнăн 23-мĕшĕнче кунпа çĕр танлашать. Малашне вара декабрĕн 22-мĕшĕччен кун кĕскелсе пырать, çĕр вăрăмланнăçемĕн вăрăмланать.

## Словарь ĕçĕ

**кĕр тырри акса хăварнă вĕçĕ-хĕррисĕр анасем** — поля, засеянные озимыми
**каю** — отава (трава, отрастающая на сенокосах после первого укоса)
**каюллă улăх-çаран** — луга с отавой
**тĕл-тĕллĕн шупкалнă-хĕрелнĕ ката-вăрман** — рощи и леса, окрасившиеся местами в бледно-розовый цвет
**кĕпе вĕççĕн çӳре** — ходить в одной лишь рубашке (без верхней одежы)
**татăлса-таткаланса пĕтнĕ эрешмен картисем вылянса ялтăраççĕ** — блестят оторванные паутинки
**йăмăх** — здесь: краснеть, алеть, румяниться
**шăранакан кăвар евĕрех çиç** — сверкают словно пылающие угли
**чуна илĕрт** — манит душу
**пысăк ушкăнсене пĕрлеш** — здесь: собираться в большие стаи

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле термин пытаннă-ши?*

**...** — небольшое эпическое произведение, повествующее об одном или нескольких событиях в жизни человека.
**...** тесе пурнăçра пулса иртнĕ пĕр-пĕр ĕçе сăнлакан, калăпăшĕ тĕлĕшĕнчен пысăках мар илемлĕ литература хайлавне калаççĕ.

## Ыйтусемпе ĕççем:

1. Тавралăх авăн уйăхне мĕнлерех кĕтсе илет-ши?
2. Шыв хĕрринче мĕнле улшăнусем курма пулать? Тупса вулăр.
3. Авăн уйăхĕнчи вăрман çинчен калавра мĕн çырнă?
4. Садсенче, уй-хирте мĕнлерех?
5. Кĕркунне кăвак çырлана мĕншĕн типĕ çанталăкра кăна татма юрать?
6. Калавра авăн уйăхĕнчи пулăмсем çинчен каласа е сăнласа панă?
7. Хăçан кунпа çĕр танлашать? Хăçанччен кун кĕскелсе пырать?
8. Калава вуласа мĕн çĕнни пĕлтĕр?
9. Калавăн планне тăвăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Кĕр çинчен мĕнле хайлавсем пĕлетĕр? Вĕсен авторĕсем камсем? Каласа тухăр.
2. Хăш çыравçăн кĕркунне çулталăкри чи юратнă вăхăчĕ пулнă?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Икĕ юпари сăмах майлашĕвĕсене çыхăнтарса ваттисен сăмахĕсем йĕркелĕр:*

1. Кĕрхи кун — …
2. Кĕр пуйтарать, …
3. Кĕркунне çерçи те …
4. Кĕрхи çумăр каллех килет, …
5. Çумăр йĕпетсен те …

а) çур çухатать.
ă) çурхи çумăр çулпа иртет.
б) пуян.
в) хĕвел типĕтет.
г) тутă кун.

## Проект

Вуланă калавпа усă курса пĕр-пĕр уйăх çинчен пысăках мар калав çырăр, ят парăр.

### Георгий Ефимов
### (1928 – 2005)



***Георгий Андреевич Ефимов*** *— чăваш халăх сăвăçи, çыравçи. Вăл Чăваш кĕнеке издательствинче, Йĕпреçри халăх театрĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçатра, «Ялав» журналта вăй хунă. Георгий Ефимов прозăпа поэзире кăна мар, куçарура та тивĕçлĕ ĕçленĕ. Вăл А. Пушкин, Л. Толстой, А. Чехов, М. Горький хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Унăн сăввисемпе чăваш композиторĕсем юрăсем хывнă. Георгий Ефимов пархатарлă ĕçсемшĕн Халăхсен туслăхĕн орденне тивĕçнĕ. Çыравçăн паллă произведенийĕсем: «Çăкăр» (Хлеб), «Атте çĕрĕ» (Земля предков), «Сенкер инçет» (Голубая даль), поэмăсем, «Ача» (Ребенок), «Ачашлăхпа ултав» (Нежность и предательство) калавсем. Георгий Ефимов хăйĕн хайлавĕсенче çут çанталăк илемĕ, чăваш чĕлхи пуянлăхĕ, чăваш çĕрĕ çинчен çырса кăтартнă.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Георгий Ефимов камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?
2. Çыравçă мĕнле ĕçсемшĕн Халăхсен туслăхĕн орденне тивĕçнĕ?

### ТУМНЕ ХЫВМА ĔЛКĔРЕЙМЕН

*Калав*

Кăçал хĕл ир ларчĕ. Октябрь уйăхĕ вĕçĕнче юр ÿкрĕ те куçран çухалмарĕ. Йывăçсен турачĕ çинче те, пас тытнă евĕр, юр меллĕн майлашăнса выртнă.

Ял хĕрринчи кÿлле те çÿхе юр хупласа хучĕ. Хăш-пĕр ачасем конькипе ярăнас ĕмĕтпе çав пăр çирĕплĕхне кунне темиçе хут та тĕрĕсле-тĕрĕсле пăхкаларĕç. Анчах пăрĕ çурхах пек çеç.

Сăрт хĕрринче çунашкапа ярăнакансем йышлă пулчĕç вара.

Пĕр ирхине анне шыв ăсса таврăнатчĕ. Çăл патĕнче çĕнĕ хыпар нумай пулакан. Унтан анне яланах çĕннине илтсе килет. «Çавăн çапла тет... Çав авланнă теççĕ», — пĕлтерет вара витрисене пушатса пальтине хывсан.

Ку хутĕнче те çаплах пулчĕ. Анне атте енне çаврăнчĕ те:

— Терен мулкачă тытса килнĕ тет. «Шурă юр çинче хăмăррăн курăнать мулкачă. Персе ÿкерме питĕ çăмăл пулчĕ», — тесе каларĕ тет арăмне… Санăн та пăшална уссăр çакса усрас марччĕ.

Атте пĕр вăхăт нимĕн чĕнмесĕр ларчĕ. Унтан урай тăрăх каллĕ-маллĕ уткалама тытăнчĕ.

— Мĕн, Терене ăмсанатăн-и? — йĕкĕлтенĕ пек каласа хучĕ анне.

— Тупнă ăмсанмалли, — терĕ атте. — Хе… шурă юр çинчен хăмăррăн курăнать… Ытла та çăмăл. Чăнах, пер те ÿкер. Чăн-чăн сунарçă çапла хăтланать-и? Халĕ мулкачсем хĕл ир ларнăран тумне хывса ĕлкĕреймен. Уншăн хайсем те пăшăрханаççĕ ĕнтĕ. Акă мулкачăсем тумне улăштарччăр-ха, шуралччăр, вара сунара кайăп та. Сунарçă вăл мулкачă тытакан çеç мар, ăна упраканĕ те пулма тивĕçлĕ.

## Словарь ĕçĕ

**юр меллĕн майлашăнса выртнă** — здесь: укрылось снегом
**юр хупласа хучĕ** — снег укрыл
**ярăнас ĕмĕт** — мечта прокатиться
**пăр çирĕплĕхĕ** — прочность льда
**пăрĕ çурхах пек** — лед как пленка (тонкий)
**яланах çĕннине илтсе килет** — узнает что-то новое
**персе ÿкер** — застрелить
**пăшална уссăр çакса усрас марччĕ** — не хранить бы ружьё без надобности
**чĕнмесĕр лар** — сидеть молчком (промолчать)
**каллĕ-маллĕ уткала** — ходить взад и вперед
**йĕкĕлте** — дразнить, подшучивать
**ăмсан** — зариться, завидовать

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Кăçалхи çул хĕл хăçан ларчĕ?
2. Ачасем сăрт çинчен çунашкапа ярăнма пултарнă-и?
3. Ачасем мĕншĕн конькипе ярăнма пултарайман?
4. Хĕл ир ларни мулкачсене пăшăрхантарнă-и? Мĕншĕн?
5. «*Унтан (çăл патĕнчен) анне яланах çĕннине илтсе килет*» — тенине мĕнле ăнланатăр?
6. Терен ял халăхне мĕнпе тĕлĕнтернĕ?
7. Ача ашшĕ çак хыпара мĕнлерех йышăнать: ăмсанса, савăнса е хумханса?
8. Ача ашшĕн шучĕпе чăн-чăн сунарçăн мĕнле пулмалла? Ашшĕн шухăшне çирĕплетекен сăмахсене текстра тупса вулăр. Эсир унăн шухăшĕпе килĕшетĕр-и?
9. Калавăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать-ши?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Автор калавра мĕнле çивĕч ыйту (проблема) хускатнă?

2. Калав мĕне вĕрентет? Ăнлантарăр.

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Калаври ашшĕпе амăш калаçăвĕн партитурине тăвăр, рольпе илемлĕ вуласа парăр.

**Литературный герой** — это образ человека или животного в художественной литературе. Также в этом смысле используют понятия «*действующее лицо*» и «*персонаж*».

**Литература геройĕ –** илемлĕ хайлаври персонаж, ĕç тăвакан тĕп çын.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вырăсла куçарăр е тӳр килекен вырăсла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Этем — çут çанталăк ачи.
2. Çут çанталăк — пирĕн тăван кил.
3. Çут çанталăкра кашни вăхăтăн хăйĕн илемĕ.
4. Упине тытиччен тирне ан сӳ.
5. Вăрман пек пуянни çук, уй пек асли çук.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Калавра миçе литература геройĕ тĕл пулать? Вĕсен ячĕсене каласа тухăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

1. Аялта панă сăн ӳкерчĕкпе паллашăр. Текстри хăш предложенисем картинăпа пĕр килеççĕ? Тупса вулăр.
2. Сăн ӳкерчĕк тăрăх калав тăвăр. Калава ят парăр.



# ЛИТЕРАТУРА ЮМАХĔСЕМ — ЛИТЕРАТУРНЫЕ СКАЗКИ

## Константин Иванов (1890-1915)



***Константин Васильевич Иванов*** *— чăваш поэзийĕн классикĕ. Вăл ялти пуçламăш шкулта, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Поэт И.Я. Яковлев вĕренекенĕ пулнă. Экстерн йĕркипе экзамен тытса вĕрентӳçĕ ятне тивĕçнĕ, Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче ĕçленĕ — ачасене вĕрентнĕ. Поэзире кăна мар, драматургире те, куçарура та тивĕçлĕ ĕçленĕ. Паллăрах хайлавĕсем: «Тăлăх арăм», «Тимĕр тылă» балладăсем, «Икĕ хĕр» юмах, «Шуйттан чури» трагеди, «Нарспи» поэма. К.В. Ивановпа пĕрле вĕреннĕ С.Н. Алексеев хăйĕн аса илĕвĕнче çапла çырнă: «Уроксене хатĕрлесе çитернĕ хыççăн, пĕр-пĕр кĕтесе кĕрсе, хăй кăна пĕлекен кĕвве хуллен юрласа ларатчĕ, анчах эпĕ вăл çапла сăмахсем шыраса сăвăсем çырнине чылай вăхăт пĕлмен. Константин вырăс поэчĕсен произведенийĕсене куçарнине, хăй çырнине тата ӳкерме ăсталанса пынине каярахпа кăна туйса илтĕм, мĕншĕн тесен вăл, е хăйĕнчен куласран хăраса, е вăтаннипе, хăй кăмăлланă ĕçсене питĕ вăрттăн тăватчĕ, шавласа çӳреме юратмастчĕ».*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Константин Иванов хăш шкулта вĕреннĕ?
2. Унăн пултарулăхĕ хăш-хăш жанрсенче палăрнă?
3. Чăваш классикĕ куçару ĕçĕпе ĕçленĕ-и? Хăвăр шухăша çирĕплетекен вырăна тупса вуласа парăр.
4. Çырнисĕр пуçне чăваш поэзийĕн классикĕ мĕн-мĕн тума кăмăлланă?
5. Хăй кăмăлланă ĕçсене К. Иванов мĕншĕн «вăрттăн» тунă?
6. С.Н. Алексеев К.В. Иванова пĕлнĕ-ши? Çакна мĕнпе çирĕплетсе пама пултаратăр?

## ИКĔ ХĔР

*Сăвăлла юмах*

Хăйĕн аслă хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтать: «Мĕн мăнтăр?»
— Пирĕн атте килĕнчи
Кăвак лаша пит мăнтăр.
«Ăслă каларăн, хĕрĕм».
Унтан ыйтать: «Мĕн тутлă?»
— Пирĕн атте килĕнчи
Вĕллери пыл пит тутлă.
«Ăслă каларăн, хĕрĕм».
Татах ыйтать: «Мĕн çемçе?»
— Пирĕн атте килĕнчи
Тӳшек-минтер пит çемçе.
«Ăслă каларăн, хĕрĕм,
Хисеп турăн аçуна,
Ĕнтĕ сана çакăншăн
Çур мулăма паратăп».

Унтан кĕçĕн хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтать: «Мĕн мăнтăр?»
— Çут тĕнчере çĕр мăнтăр,
Унтан мăнтăр нимĕн те çук.
«Санра пархатар сахал».
Унтан ыйтать: «Мĕн тутлă?»
— Ыйхă тутлă, тĕнчере
Унтан тутли нимĕн те çук.

«Санра пархатар сахал».
Татах ыйтать: «Мĕн çемçе?»
— Алă çемçе, тĕнчере
Унтан çемçи нимĕн те çук.
«Санра пархатар сахал,
Эсĕ манăн хĕрĕм мар!»
Ашшĕ вара ку хĕрне
Хăваласах ячĕ, тет.

## Словарь ĕçĕ

**кăвак лаша пит мăнтăр** — конь сивый тучней всего
**вĕллери пыл пит тутлă** — в ульях мед душистый
**тӳшек-минтер** — пуховик, подушки
**хисеп ту** — почитать, уважать
**çур мулăм** — пол богатства
**çут тĕнче** — вселенная
**пархатар сахал** — не вижу проку
**ыйхă** — сон
**хăваласа яр** — прогнать

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăвăлла юмахри автор сăмахĕсен тата ашшĕпе хĕрĕсен калаçăвĕн партитурине тăвăр, рольпе илемлĕ вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Юмахра ашшĕн миçе хĕр пулнă?
2. Ашшĕ хĕрĕсенчен мĕн-мĕн ыйтнă?
3. Аслă хĕрĕ мĕн хуравланă? Кĕçĕн хĕрĕ мĕн хуравланă?
4. Ашшĕне камăн хуравĕ килĕшнĕ? Аслă хĕрĕн-и? Е кĕçĕн хĕрĕн-и? Мĕншĕн?
5. Ашшĕ кĕçĕн хĕрне мĕншĕн килĕнчен хăваласа янă?

## Пултарулăх ĕçĕ

Юмахри аслă хĕрпе кĕçĕн хĕрĕн хуравĕсене танлаштару таблицине (сравнительная таблица) тултарăр.

| **Аслă хĕрĕ** | **Кĕçĕн хĕрĕ** |
|---|---|
| *Мĕн мăнтăр?* | |
| Кăвак лаша пит мăнтăр | Çут тĕнчере çĕр мăнтăр |

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Юмахăн авторĕ кам? Эсир ун çинчен мĕн пĕлетĕр? Каласа парăр.
2. Халăх юмахĕсем мĕнлерех вĕçленеççĕ? К. Иванов юмахĕ мĕнле вĕçленчĕ?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Сăвăлла юмахăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахне палăртăр:*

1. Тăван йăваран хакли нимĕн те çук.
2. Ĕçрен ан хăра — вăл хăй санран хăратăр.
3. Вĕренни — сутă, вĕренменни — тĕттĕм.
4. Атте-аннерен хакли никам та çук çак тĕнчере.
5. Çăкăр хырăм хыççăн çӳремест.
6. Туслăх ылтăнран хаклăрах.

**Литературная сказка** — литературный эпический жанр в прозе или стихах, опирающийся на традиции народной сказки.

**Литература юмахĕ** — конкретлă наци литературинче пĕр пултарулăх меслечĕпе усă курса тата çав литература традицийĕсемпе çыхăнтарса çырнă хайлавсен пĕрлехи хисепĕ.

**Петĕр Хусанкай**
**(1907 – 1970)**



***Петĕр Хусанкай (Петр Петрович Хусанкай)*** *— чăваш халăх сăвăçи, литература тĕпчевçи, публицист, тăлмач, этнограф, фольклорист, чĕлхеçĕ. Вăл «Сунтал» журналта, «Коммунар» хаçатра ĕçленĕ, Чăваш АССРĕн тата РСФСРăн Аслă Канашлăвĕсен депутачĕ пулнă. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă. Вăрçăра çар журналисчĕ пулнă. Паллă сăвăçă литературăра пур жанрпа та ĕçленĕ. Вырăс тата ют çĕр-шыв классикĕсен хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Петĕр Хусанкай К.В. Иванов тата Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Паллă произведенийĕсем: «Эпир пулнă, пур, пулатпăр» (Были мы, и есть, и будем) сăвă, «Таня», «Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв?» (Что такое Родина?) поэмăсем, «Аптраман тавраш» (Род Аптраман) сăвăлла роман. Петĕр Хусанкай хăйĕн хайлавĕсенче чăваш чĕлхине упрасси, ăна малалла аталантарасси çинчен, тăван çĕр-шыв, тăван халăх çинчен çырса кăтартнă.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Петĕр Хусанкайăн пултарулăхĕ мĕнле жанрсенче палăрнă?
2. Паллă сăвăçă хăйĕн хайлавĕсенче мĕн çинчен çырса кăтартнă?
3. Петĕр Хусанкайăн паллă хайлавĕсене калăр.

### ÇАРĂК
*Сăвăлла юмах*

Пурăнаççĕ тĕнчере
Карчăкпа старик пĕрре.
Пурăнаççĕ-пурăнаççĕ,
Кантăк витĕр курăнаççĕ.

Шухăшлаççĕ çакскерсем
Кăшт пуйса пăхас тесе.
Шухăшлаççĕ-шухăшлаççĕ,
Шур ука пек шуралаççĕ.
Ак хайхи тăпрас çине
Çарăк акрĕç маччине.
Вăхăт çитрĕ: çарăк пулчĕ,
Тăпраса тулли вăл тулчĕ.
Çурăк витĕр урайне
Çарăк тăсрĕ хӳрине;
Унтан ун хӳри-тымарĕ
Тĕпсакай тĕпнех вырнаçрĕ.
«Ку тата мĕн тамаша?
Карчăк, кил-ха канаша.
Кун пек çарăк эп курманччĕ
Ырлăха-ши тымарланчĕ?»
Улăхса пăхать старик,
Тĕлĕнет вăл çав тери:
Çарăк ашкăрнă та кайнă,
Пӳртçи витĕр тухнă тарнă;
Пĕлĕтех вăл çӳлелле
Кармашать çулçипеле.
Чикмекпе старик хăпарчĕ,
Урине усса вăл ларчĕ,
Пăхрĕ, курчĕ: витĕрех
Çарăк тухнă пĕлĕтрен.
Çын тата пăртак çĕкленчĕ,
Те чăнах ку, те тĕлленчĕ:
Иккĕмĕш те виççĕмĕш,
Тăваттăмĕш, пиллĕкмĕш,
Улттăмĕш пĕлĕт те пур-мĕн,
Çарăк шав пырать. «Çĕр курмĕ
Кунашкал тамашана»,
Тет старик, хăй хавшанать,
Юлашки вăйне вăл пухрĕ, —
Çичĕ пĕлĕт витĕр тухрĕ.

## Словарь ĕçĕ

**кăшт пуйса пăхас тесе** — здесь: захотели разбогатеть
**шур ука пек шуралаççĕ** — побелели как позумент (повязка)
**мачча** — потолок, чердак
**Тăпраса тулли вăл тулчĕ** — заполнил зеляной настил на чердаке (заполнил чердак)
**çурăк витĕр** — через прореху (дыру)
**çарăк тăсрĕ хӳрине** — репа потянула корни
**тĕпсакай тĕпнех вырнаçрĕ** — расположиться в подполе
**ашкăрнă та кайнă** — буйно пойти в рост
**пӳртçи витĕр тухнă** — прорваться (проросли) сквозь укрытие крыши
**чикмекпе старик хăпарчĕ** — поднялся старик по лестнице
**юлашки вăйне вăл пухрĕ** — собрал последние силы

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăвăлла юмах сыпăкĕнчи старик сăмахĕн партитурине тăвăр, илемлĕ вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Тĕнчере камсем пурăннă?
2. Вĕсем мĕн тума шухăшланă?
3. Тăпрас çине карчăкпа старик мĕн акнă?
4. Çарăк мĕн пысăкăш ӳснĕ? Çав вырăна тупса вуласа парăр.
5. Старик ăçта улăхнă?

**ÇАРĂК**

*Сăвăлла юмах. Малалли*

Çарăк пӳлĕх пахчине
Ертрĕ кĕчĕ хайхине:
Саралса ларать капмаррăн,
Епле-ха ăна кăларан?
Кăларса хăтланиччен
Çăтмахрах пурнас-и, тен.
Анчах карчăк аялта-çке,
Карчăка та хăпартасчĕ.
Анчĕ хай старик калла,
Карчăкне хыпар калать...
«Улăхарччĕ, улăхарччĕ,
Хăвăртрах, старик!» — тет карчăк.
Ак. хайхи старик миххе
Карчăкне персе чикет;
Шăлĕпе çыртса йăтать те
Чикмекпе тапаçланать те!
Карчăкки ялан ватта
Йӳтетсе пырать шалта:
«Час çитетпĕр-и, старик?» тет.
«Çăтмаха кĕретпĕр-и?» — тет.
Старикки темскер мăрлать,
Çăварне уçма хăрать.
Карчăккин, хăпарнăçемĕн,
Пĕрех юрă, çав пĕр çемĕ:
«Аякра-и-ха çăтмах?
Улăхасчĕ-çке часрах!»
Старикки, сăмах чĕнмесĕр
Мăшлатать чĕлхесĕр евĕр.
Ултă пĕлĕт витĕр ак
Тухрĕ вăл çапла ырах.
Юлашки пĕлĕт çывхарчĕ,
Минретет пушшех хай карчăк:
«Çăтмаха нихçан капла
Çитес çук эп санпала.
Темле пӳтсĕр çарăк тупнă,
Хăвăртрах хăпар, ват супнă!»
Старикки, çиллипелен,
Улăхса çитнĕ-çитмен
(Пĕрех пусăм пусмаллаччĕ)
Тӳсеймесĕр печĕ ячĕ:
«Е, усал ашапатман!
Ĕнтĕ çитрĕмĕр, лăплан».
И! унчен те пулаймарĕ,
Вăл курса та юлаймарĕ —
Карчăкки миххипеле
Печĕ анчĕ çĕрелле.
Çичĕ пĕлĕт витĕр ӳкрĕ,
Ӳкичченех чунĕ тухрĕ.
Старикки пĕлĕт çинче,
Пӳлĕх аслă пахчинче
Карчăкне юпа чысларĕ,
Асăнса пичке пуçларĕ.
Эп те пултăм юпинче,
Çичĕ пĕлĕт тӳпинче.
Асату юрри юрларăм.
Сухала çыртса ташларăм.
Алтăрпа ĕçрĕм сăра,
Тав туса мĕнпурсăра.

## Словарь ĕçĕ

**пӳлĕх** — провидение, божество (Пӳлĕх раздает людям несчастливый либо счастливый жребий)
**ертрĕ кĕчĕ** — привёл
**çăтмах** — рай
**карчăкне персе чикет** — засунул старуху
**чикмекпе тапаçланать** — поднимается по лестнице
**йӳтетсе пыр** — донимать, надоедать, выводить из терпени
**мăшлатать чĕлхесĕр евĕр** — пыхтит словно немой
**минретет** — доводить до отупения
**темле пӳтсĕр çарăк тупнă** — нашел негодную (бестолковую) репу
**тӳсеймесĕр печĕ ячĕ** — сказал не вытерпевь
**ӳкиччченех чунĕ тухрĕ** — отдала душу до того, как упала
**карчăкне юпа чысларĕ** — помянул старуху
**асăнса пичке пуçларĕ** — открыл бочку в память (о старухе)

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăвăлла юмах сыпăкĕнчи карчăк сăмахĕпе старик сăмахĕн партитурине тăвăр, илемлĕ вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Ҫарӑк старике ӑҫта «ертсе кӗчӗ»?
2. Старик мӗншӗн каялла аннӑ?
3. Иккӗмӗш хут старикпе карчӑк «ҫӑтмаха» мӗнле улӑхнӑ? Тупса вулӑр.
4. Старикки карчӑкне ҫиллипелен хуравлани юмахӑн хӑш йӗркисенче палӑрать? Тупса вулӑр. Ҫак йӗркесене хӑвӑр сӑмахсемпе ӑнлантарӑр.
5. Юмах мӗнле вӗҫленчӗ? Мӗншӗн?
6. *«Карчӑкне юпа чысларӗ,*
   *Асӑнса пичке пуҫларӗ»,* — юмах йӗркисене мӗнле ӑнланатӑр?

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

Мӗншӗн П. Хусанкай ҫырнӑ «Ҫарӑк» хайлава *юмах* тесе палӑртнӑ? Кун пекки чӑн пурнӑҫра тӗл пулать-ши?

## Культурӑсен ҫыхӑнӑвӗ

Вырӑс халӑхӗн «Ҫарӑк» юмахне аса илӗр. Юмахри персонажсене каласа тухӑр.

## Халӑх ӑс-хакӑлӗ

*Тупмалли юмахӑн тупсӑмне пӗлӗр.*

Хӑй ҫавракa — уйӑх мар, хӳреллӗ — шӑши мар, ешӗл — вӑрман мар.

## Пултарулӑх ӗҫӗ

*Панӑ ӗҫсенчен пӗрне суйласа илӗр:*

1. Сӑвӑлла юмахӑн содержанине виҫҫӗмӗш сӑпатран каласа пама хатӗрленӗр.
2. Тупмалли юмахӑн тупсӑмӗпе кроссворд тӑвӑр.



### Юрий Сементер
### (1941)

***Юрий Сементер (Юрий Семенович Семенов)*** *– чӑваш халӑх сӑвӑҫи, куҫаруҫӑ, Чӑваш Республикин культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ. Шоферта, клуб заведующийӗнче, комсомол райкомӗн пай пуҫлӑхӗнче, район хаҫачӗнче, Чӑваш кӗнеке издательствинче, «Ялав» журналӑн тӗп редакторӗнче вӑй хунӑ. Юрий Сементер сӑвӑ, юрӑ, поэма, либретто тата илемлӗ куҫару ӗҫӗнче палӑрнӑ. Вӑл Ҫеҫпӗл Мишши, Нестер Янкас, Фатых Карим ячӗллӗ премисен лауреачӗ. Унӑн паллӑрах*

*кĕнекисем: «Тупа» (Присяга), «Аван-и, салтак» (Здравствуй, солдат), «Чĕнтĕрлĕ кĕпер» (Узорчатый мост), «Хуркайăк çулĕ» (Млечный путь).*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Юрий Сементерĕн пултарулăхĕ мĕнле жанрсенче палăрнă?
2. Сăвăçă мĕнле премисене тивĕçнĕ?

## ВИЛĔМЕ УЛТАЛАНИ

*Сăвăлла юмах*

Ĕлĕк-авал пĕр ялта
Пĕр ватă çын пурăннă,
Çитмĕл урлă каçсан та
Çамрăк сăнлă курăннă.
Çулне кура ун патне
Вилĕм пырса кĕчĕ тет,
Хăвăртрах леш тĕнчене
Пуçтарăнма хушрĕ тет.
— Чим-ха, — терĕ тет ватти
Хура сăнлă Вилĕме, —
Пулаймасть капла латти,
Ан татсам ĕмĕтĕме:
Эп курасшăн кинĕме,
Эп курасшăн мăнука,
Юлакан еткерĕме*
Сиктересшĕн утьăкка!
— Юрĕ, тăхтăп пĕр кана, —
Терĕ тет хура тумли,
Чăмрĕ тет сĕм вăрмана
Кăлтăр-кăлтăр пан улми.
Пурăнать ват çын ялта,
Туй тăвать те кин кĕртет,
Мăнукне алла тытать,
Сăпкара та сиктерет.
Ерçӳ пулнă кунсенче
Селĕм* тупăк ăсталать,
Питĕрмешкĕн тул енчен
Тимĕр çекĕлне лартать.

Акă Вилĕмĕ пырать:
— Çитрĕ, — тет, — кайма черет,
Ват çынни калать: — Юрать,
Эпĕ килĕшетĕп, — тет.
Витерен вăл кăларать
Хăйĕн сарă тупăкне,
Айăкпа кĕрсе выртать
Хыр шăршиллĕ çĕн пӳртне.
Вилĕмĕ калать ăна:
— Тĕрĕс мар выртатăн эс!
— Ара, выртса курманна
Малтанах ăçтан пĕлес?
Çаврăнам эппин ӳпне.
— Çук, пĕлместĕн эс майне.
— Пур пулсан йĕркӳ-курку,
Тен, выртса кăтартăн ху?
— Тăр, услап, акă çапла
Месерле сан выртмалла, —
Тет те Вилĕм ват çынна
Майлашса выртать кăна —
Лешĕ куç хупичченех
Çаклатать те çекĕле
Атăл тăрăх пĕчченех
Ăсатать чун иллине.
Сĕмсĕр Вилĕм урăхран
Пĕр çынна та курăнман.
Чун тухас чухне кăна
Вăл çитет çав вырăна.

## Словарь ĕçĕ

**леш тĕнче** — загробный мир
**хура сăнлă Вилĕме** — Смерть в черном облике
**ан татсам ĕмĕтĕме** — не разрушай мечту
**юлакан еткерĕме** — *здесь:* наследник
**сиктересшĕн утьăкка** — подбрасывать вверх (ребенка) **селĕм тупăк ăсталать** — мастерит красивый гроб
**тимĕр çекĕл** — железный крючок

**айăкпа кĕрсе выртать** — ложиться на бок
**çаврăнам эппин ÿпне** — лягу на живот

**услап** — *здесь:* недотёпа
**месерле** — навзничь, на спину
**чун илли** — душегуб
**кин** — невестка, сноха

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăвăлла юмахри автор сăмахĕсен тата ватă çынпа Вилĕм калаçăвĕн партитурине тăвăр, рольпе илемлĕ вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Ватă çын миçе çула çитнĕ? Вăл мĕнле курăннă?
2. Ун патне Вилĕм миçе хутчен пынă?
3. Пĕрремĕш хут пырсан ватă çын Вилĕме мĕнле ÿкĕте кĕртнĕ? Тупса вуласа парăр.
4. Иккĕмĕш хут пынă çĕре ватă çын мĕн хатĕрленĕ?
5. Ватă çын Вилĕме мĕнле улталанă? Ăнлантарса парăр.
6. Ватă çын мĕнлерех?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Мĕншĕн Ю. Сементер çырнă хайлава *сăвăлла юмах* тесе палăртнă?
2. Хăвăр вуланă ытти çыравçăсен юмахĕсене аса илĕр. Вĕсене кам çырнине калăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

*Панă ĕçсенчен пĕрне суйласа илĕр:*

1. Хăвăр вуланă сăвăлла юмахсене аса илĕр. Вĕсенчен хăшĕ асра юлчĕ? Çав юмах çинчен каласа пама хатĕрленĕр.
2. «Ырă çынпа усал çын» темăпа кĕске юмах çырăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле термин пытаннă-ши?*

**Литературная сказка — …**
**Литература юмахĕ — …**

## Ÿнер тата сăмах тĕнчи

Вуланă литература юмахĕсенчен пĕрне суйласа илсе унăн ÿкерчĕкне тăвăр.

# ТĂВАН ЧĔЛХЕ — ЭС ЧИ ПАХИ —
# РОДНОЙ ЯЗЫК — СВЯТОЙ ЯЗЫК

## Алексей Воробьев
## (1922 - 1976)



***Алексей Александрович Воробьев** — чăваш сăвăçи. Вăл Канаш районĕнчи çĕр ĕç пайĕнче, Йĕпреçри МТС пуçлăхĕнче, Чăвашрадиовĕн ял хуçалăх кăларăмĕсен редакторĕнче вăй хунă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă. Алексей Воробьев Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премин лауреачĕ. Сăвăçăн паллăрах кĕнекисем: «Туслăх çăлтăрĕ» (Звезда дружбы), «Кăнтăрла» (Полдень), «Йăмра» (Ветла). Алексей Воробьев хăйĕн хайлавĕсенче тăван тавралăх, ял пурнăçĕ, çĕр-анне темисене хускатнă.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

Алексей Воробьев ытларах мĕн çинчен çырнă?

## ХАМ ЧĂВАШ ПУЛНИШĔН МУХТАНАТĂП

Çĕршывра ăçта кăна çитместĕп,
Пур çĕрте те маншĕн пархатар.
Хам чăваш пулнишĕн именместĕп.
Никамран та эпĕ катăк мар.

Темĕн вырăнне хама хумасăр,
Çынпа тан пулнишĕн савăнса,
Эп çÿретĕп ирĕклĕ те харсăр.
Çавăнпа пырать ман çул ăнса.

Хам чыса эп куç пекех сыхлатăп.
Юнăмра мăнкăмăллăх пур ман.
Хам чăваш пулнишĕн мухтанатăп.
Эс те, тусăм, ху камне ан ман.

### Словарь ĕçĕ

**именместĕп** — **не стесняюсь**
**катăк мар** — не хуже остальных
**темĕн вырăнне хама хумасăр** — не возвышая себя
**тан пулнишĕн** — равноправен
**ирĕклĕ** — свободен
**харсăр** — **смело, храбро, отважно дерзко, отчаянно, решительно**
**пырать çул ăнса** — везет в жизни
**чыс** — честь
**юнăмра мăнкăмăллăх пур** — есть гордость в крови

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăç хăй чăваш пулнишĕн именет-и? Вăл хăйне ытти халăхран катăкрах тесе шутлать-и?
2. Сăвăçăн çулĕ мĕншĕн ăнса пырать?
3. *«Юнăмра мăнкăмăллăх пур ман»,* — сăвă йĕркисене мĕнле ăнланатăр?
4. Сăввăн юлашки икĕ йĕркине тепĕр хут вулăр. Вĕсем мĕнле туйăм çуратаççĕ? Автор çак йĕркесемпе пире мĕнле пулма чĕнсе калать-ши?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. *«Куç пек упра»* тенине вырăссем мĕн теççĕ? Мĕншĕн автор хăй чысне *«куç пекех сыхлатăп»* тесе палăртать?
2. Эпир пурăнакан çĕршыв мĕн ятлă? Ун çинчен каласа парăр.
3. Чăваш Республики çинчен мĕн пĕлетĕр? Ун çинчен каласа парăр.

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Илемлĕ вулама вĕренĕр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

Панă сăмахсенчен ваттисен сăмахĕ пуçтарăр, вырăсла куçарăр.

*Маннă, итлекенни, тет, калаканни, тет, манман.*

## Культурăсен çыхăнăвĕ

Вырăс çыравçисен тăван чĕлхе çинчен çырнă хайлавсене аса илĕр, авторĕсене палăртăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

Чăваш республикинче хăш-хăш чĕлхепе калаçаççĕ? Ыйтăва кластер çырса хуравлăр.



**Иван Андреев**
**(1928 – 2011)**

***Иван Андреевич Андреев*** *— чăваш чĕлхи тĕпчевçи, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор, академик. Вăл ăслăхпа тĕпчев институчĕн чĕлхе уйрăмĕн — пайĕн пуçлăхĕнче, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетăн деканĕнче, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕнче вăй хунă. Иван Андреев 200 ытла тĕпчев ĕçĕн авторĕ. Вăл чăваш чĕлхин синтаксис, морфологи, фонетика, орфографи, пунктуаци, лексикографи ыйтăвĕсене тĕпченĕ, чĕлхе*

*наукинчи, шкул грамматикинчи чи ҫивӗч ыйтусене хускатнӑ, тӗрлӗ вӗренӳ программисемпе кӗнекисене хатӗрленӗ. Иван Андреев чӑвашла-вырӑсла, вырӑсла-чӑвашла словарьсене хатӗрлесе кӑларас ҫӗрте чылай вӑй хунӑ. Иван Анреевӑн паллӑ ӗҫӗсем йышне «Ҫын ячӗсем» (Имена), «Причастие в чувашском языке», «Чӑваш чӗлхин лексикологийӗ» (Лексикология чувашского языка), «Хальхи чӑваш чӗлхи. Синтаксис» (Современный чувашский язык. Синтаксис) кӗнекисене кӗртмелле.*

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

Иван Андреев академик хӑш ӑслӑлӑхра (наукӑра) палӑрнӑ?

## ТӐВАН ЧӖЛХЕ — АСАТТЕСЕН ПЕХИЛӖ

*Тӗрленчӗк*

Ҫӗр ҫинче темиҫе халӑх пӗр чӗлхепе калаҫни пур. Акӑ нимӗҫсемпе австриецсен чӗлхи пӗрре — нимӗҫ чӗлхи. Ҫавнашкалах акӑлчансем, американецсем, Австрали, Ҫӗнӗ Зеланди ҫыннисем пӗр чӗлхепе — акӑлчанла калаҫаҫҫӗ. Ҫав хушӑрах пӗр халӑх икӗ чӗлхепе калаҫни те тӗл пулать. Пирӗн кӳршӗсенех акӑ — мордва халӑхӗн — чӗлхи иккӗ: ирҫе тата мӑкшӑ чӗлхисем.

Ҫапах та кашни халӑх хӑйӗн уйрӑм чӗлхипе калаҫни ҫӗр ҫинче ытларах сарӑлнӑ. Авал пӗр халӑха тепринчен чӗлхине пӑхса уйӑрнӑ. Хӑйӗн чӗлхи пулмасан халӑха уйрӑм халӑх вырӑнне те хуман.

Чӑвашӑн авалтанпах хӑйӗн чӗлхи пулнӑ. Пирӗн мӑн асаттесем пин ҫул каяллах хӑйсен чӗлхипе калаҫнӑ, ӑна сыпӑкран сыпӑка халалласа пынӑ, куҫ пек упрама тӑрӑшнӑ.

Чӑваш чӗлхи ӗмӗрсем хушши пуянланса, туптанса пынӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче пирӗн чӗлхе арабпа перс сӑмахӗсемпе пуянланнӑ (тӗслӗхрен: вӑхӑт, самана, сехет, телей). Юнашар халӑхсем те чӑвашран сахал мар сӑмах йышӑннӑ. Мари чӗлхинче, тӗслӗхрен, ҫӗр-ҫӗр чӑваш сӑмахӗ шутланать. Венгр чӗлхинче те чӑваш сӑмахӗсем ик ҫӗр ытла (авал венгрсен мӑн аслашшӗсем пӗр хушӑ чӑвашсемпе кӳршӗллӗ пурӑннӑ).

Ӗлӗк чӑваш ялта пурӑннӑ, ял тулашне сайра тухнӑ. Халӗ Раҫҫейре чӑваш пурӑнман область е хула ҫук та пулӗ. Чӑваш халӑхӗн ҫурри ытла республика тулашӗнче пурӑнать. Тӗнчен тӗрлӗ кӗтесне сапаланнӑ халӑха хальхи вӑхӑтра тӑван чӗлхе пӗрлештерет. Манар мар ӑна, тӑван чӗлхемӗре!

## Словарь ӗҫӗ

**халӑх** — народ
**кӳршӗ** — сосед
**ирҫе** — эрзя, эрзянин
**мӑкшӑ** — мокша, мокшанин
**чӗлхине пӑхса уйӑрнӑ** — язык был отличительной чертой народа
**уйрӑм халӑх вырӑнне хуман** — не считали отдельной нацией
**мӑн асатте** — предки
**халалласа пынӑ** — завещали
**куҫ пек упра** — беречь как зеницу ока
**ӗмӗрсем хушши** — веками
**туптанса пынӑ** — закалялся
**юнашар халӑхсем** — соседние народы
**сӑмах йышӑннӑ** — заимствовали
**республика тулашӗнче** — за пределами республики

## ЫӀйтусемпе ĕçсем:

1. Çĕр çинче темиçе халăх пĕр чĕлхепе калаçма пултарать-и?
2. Пĕр халăх икĕ чĕлхепе калаçни тĕл пулать-и?
3. Пĕр халăха тепринчен авал мĕнле майпа уйăрнă?
4. Авал хăйĕн чĕлхе пулман халăха уйрăм халăх вырăнне хунă-ши?
5. Чăваш халăхĕн авал хăйĕн чĕлхи пулнă-и?
6. Чăваш чĕлхи ĕмĕрсем хушши мĕнле майпа пуянланса, туптанса пынă?
7. Чăвашсем халĕ ăçта-ăçта пурăнаççĕ?
8. И.Андреев тĕрленчĕке мĕнле ят панă? Эсир ун ятне мĕнле ăнланатăр?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Мĕншĕн пирĕн мăн асаттесем тăван чĕлхемĕре «куç пек упрама» тăрăшнă?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахĕсен тӳр килĕвĕсене тупăр.*

1. Сăмах вăл ут мар, пĕрре каласа ярсан каялла тавăраймăн.
2. Сăмах патăн — пурнăçла.
3. Усал хыпар — тӳр çулпа, ырă хыпар — çавра çулпа.
4. Икĕ чĕлхе — икĕ ăс, виçĕ чĕлхе — виçĕ ăс.
5. Инçе шухăшла та, çывăхра пурăн.

а) Два языка — два ума, три языка — три ума.
ă) Слово не воробей: вылетит — не поймаешь.
б) О дальнем думай, а ближайшем живи.
в) Дурная слава по прямой дороге, а хорошая — в обход.
г) Слово ровно золоту.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле термин пытаннă-ши?*

**...** — краткая запись о чём-либо.
**...** — пĕр-пĕр ĕç е çул çӳревре курни çинчен кĕскен, сăнарлă çырса кăтартни.

# ТĂВАН КИЛ — ЫЛТĂН САПКА —
# РОДНОЙ ДОМ — ЗОЛОТАЯ КОЛЫБЕЛЬ

## Петĕр Хусанкай



Н.В. Овчинников.
Петĕр Хусанкай портречĕ

***Петĕр Хусанкай (Петр Петрович Хусанкай)** — чăваш халăх сăвăçи. Унăн сăввисемпе поэмисене пĕлмен чăваш сахал. Сăвăçă çырнă «Таня», «Тăван çĕр-шыв» поэмисене, «Тилли юррисем» сăвă ярăмне, «Аптраман тавраш» сăвăлла романне халăх кăмăлласа вулать. Вăл пурĕ 50 кĕнеке ытла пичетлесе кăларнă. Вĕсенчен 15 вырăсла çутта тухнă. Паллă сăвăçăн ют çĕр-шывсенче те нумай кĕнеке калăпланнă. Чи паллисен шутĕнче унăн «Аптраман тавраш» сăвăлла романĕ тăрать. Сăвăлла романăн ячĕ халăх хушшинче афоризм пек çӳрет. П. Хусанкай çырнă «Аптраман таврашра» Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи çулĕсенчи совет халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕпе ĕçĕсене сăнласа панă.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Кам вăл Петĕр Хусанкай? Вăл сăмах ӳнерĕн хăш жанрĕнче палăрнă?
2. Мĕнле шутлатăр: камăн хайлавне чăвашла куçарни Петĕр Хусанкая «Аптраман тавраш» сăвăлла роман çырма хавхалантарнă-ши?
3. Петĕр Хусанкай çырнă «Аптраман тавраш» сăвăлла роман мĕн çинчен?
4. «Аптраман тавраш» тени вырăсла мĕнле куçать-ши?

## САПКА ЮРРИ.
## АТНЕРЕ

*«Аптраман тавраш» роман сыпăкĕ*

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!

Урупа ан тапкалаш,
Аллупа ан çапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

Ашă çумăр чаш та чаш,
Ӳс, калчам, çĕклен эс яш,
Çӳлерен çӳле кармаш.
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Юлташпа эс пул юлташ,
Усалпа эс ан паллаш.
Тăшманпа ан пул йăваш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

Вырăспа та тăванлаш,
Тутарпа та эс туслаш,
Пурте — пирĕн хурăнташ,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!

Малалла утсан — малаш,
Каялла юлсан — каяш,

Чăн çултан эс ан аташ. Çывăр, Аптраман тавраш!

## Словарь ĕçĕ

**сĕм вăрман** — тĕмный лес
**сулхăн çил** — прохладный ветер
**ан çуйăх, ан çухраш** — не шуми и не кричи
**ан тапкалаш** — не брыкайся (пинайся)
**ан çапкалаш** — не дерись
**ан тавлаш** — не спорь
**калча** — поросоль
**Аптраман тавраш** — род Аптраман (умеющий терпеть, не сдающийся)
**çӳле кармаш** — тянись к верху
**ан паллаш** — не знакомься
**ан пул йăваш** — не будь кротким
**пирĕн хурăнташ** — наш родственник
**чăн çултан эс ан аташ** — не сворачивай с истиной (правдивой) дороги

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕн вăл сăпка юрри? Ăна хăçан юрлаççĕ?
2. Усалпа, тăшманпа мĕнлерех пулмалла-ши? Юрăра ун çинчен мĕн каланă?
3. Туслăх çинчен юрăра мĕн çырнă? Тупса вулăр.
4. Юрăри евĕрлев самахĕсене тупса палăртăр. Автор вĕсемпе мĕн тĕллевпе усă курнă-ши?
5. Юррăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать? «Аптраман тавраш!» тени мĕне пĕлтерет?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. П. Хусанкай хăйĕн «Сăпка юррине» кама халалланă?
2. Мĕнле шутлатăр, Атнер сăвăçшăн кам пулать-ши?

## Итлев-тăнлав

П. Хусанкай çырнă «Сăпка юрри» сăвă сăмахĕсемпе А. Петров композитор юрă хывнă. Юрра итлесе пăхăр та юрлама вĕренĕр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Правилăна малалла тăсăр.*

**Тема — … .**
**Проблема — … .**

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вырăсла куçарăр е тӳр килекен вырăсла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Атте-аннерен хакли никам та çук çак тĕнчере.
2. Амăшĕ епле — хĕрĕ çапла.
3. Ват çын — тăват çын.

4. Ватта итлес пулать, çамрăка вĕрентес пулать.
5. Çынна усал ан ту, хăвна та усал туменĕç.
6. Çынна темпе те кӳрентерме пулать — сăмахпа та, ĕçпе те.



## Николай Хутар
## (1942-1994)

***Николай Хутар (Николай Петрович Иванов)*** *— сăвăçă, журналист. Вăл Чăваш радиокомитетĕнче, Çĕмĕрле район хаçатĕнче вăй хунă. Николай Хутар 300 ытла сăвăсемпе калавсен авторĕ. Унăн сăввисемпе чăваш композиторĕсем юрăсем хывнă. Николай Хутар хăйĕн хайлавĕсенче тăванлăх, çемье çинчен çырса кăтартнă.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

Николай Хутар мĕн çинчен çырнă?

## АННЕ ТИВЛЕЧĔ

Тăван кĕтес аса килсен
Чĕрем хушать çула тухма.
Сар кайăкран çунат илсе
Анне патне вĕçсе кайма.

Аннеçĕмпе пĕрле пулсан
Чун-чĕрене хыпать хĕлхем.
Çĕн вăй илсе, çĕн вăй пухса
Кăкăрăмра тапать чĕрем.

Кашни этемĕн çĕр çинче
Анне пĕрре, çĕршыв пĕрре.
Кун-çул телейĕ вĕсенче
Çиçет хĕрӳллĕн ĕмĕрех.

### Словарь ĕçĕ

**анне тивлечĕ** — материнское счастье
**чĕрем хушать** — велит сердце
**сар кайăкран çунат илсе** — взять у иволги крылья
**чун-чĕрене хыпать хĕлхем** — здесь: от радости искрится сердце
**тапать чĕрем** — бьется сердце
**çиçет хĕрӳллĕн** — пламенеет

### Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр, илемлĕ вуласа парăр. Сăвă мĕнле кăмăл çуратрĕ?

### Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвва автор кама халалланă?
2. «Сар кайăкран çунат илсе» автор ăçта «вĕçсе кайма» шутлать?
3. Авторăн чĕрине хăçан хĕлхем хыпать?
4. Кашни этемĕн çĕр çинче кам тата мĕн пĕрре шутланать?
5. Сăвва мĕншĕн «Анне тивлечĕ» тесе ят панă?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Çемье çинчен мĕнле хайлавсем пĕлетĕр? Каласа тухăр.
2. Çак фразеологизмсене вырăсла куçарăр: «ылтăн алă», «йывăра ил», «пилĕк ав», «çăмăл алă». Вĕсене «анне» сăмахпа çыхăнтарма пулать-и?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр:*

1. Амăшĕ епле, …
2. Ват çын — …
3. Ватă çынтан ан кул — …
4. Виççĕри ывăл ача ашшĕне пулăштăр, …
5. Çынна усал ан ту, …

**Лирический герой** — образ поэта (его лирическое «Я»), чьи переживания, мысли и чувства отражены в лирическом произведении.

**Лирика геройĕ (çуйлану геройĕ)** — сăвăçăн лирикăри сăнарĕ; автор ăнланулăхне уçса памалли мелсенчен пĕри.

### Анатолий Смолин
### (1957-2012)



***Анатолий Семёнович Смолин*** *— чăваш сăвăçи, куçаруçă. «Çил çунат» журналта, Чăваш Ен Республикин президенчĕн пулăшаканĕнче ĕçленĕ. Унăн пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ. Поэзире кăна мар, публицистикăра та, куçару ĕçĕнче те ăнăçлă ĕçленĕ. М. Федоровăн «Арçури», К. Ивановăн «Нарспи» поэмисене, Çеçпĕл Мишшин, Ухсай Яккăвĕн сăввисене — вырăсла, А. Пушкин, С. Есенин сăввисене чăвашла куçарнă. Унăн сăввисемпе чăваш композиторĕсем юрăсем хывнă. Анатолий Смолин Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премин лауреачĕ. Паллă кĕнекисем: «Çаврăм» (Круг), «Кĕтрет кĕтесĕ» (Уголок чуда), «Первый раз в первый класс», «Çӳретпĕр Çеçпĕл çулĕпе» (Святая Сеспеля стезя).*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Анатолий Смолинăн пултарулăхĕ мĕнле жанрсенче палăрнă?
2. Сăвăçă камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?

### АННЕ — ПИРĔН ТĔНЧЕ

Аннене суйламаççĕ,
Ма тесен вăл — пĕрре.
Аннене хурламаççĕ —
Вăл çуратнă пире.

Эс, аннеçĕм, юратнă
Кашнине чĕререн
Ăшă туйăм вăратнă
Юрласа каççерен.

Сана вăхăт илеймĕ
Ачусен чĕринчен.
Анне — пурнăç илемĕ,
Анне — пирĕн тĕнче.
Ачусем сас памаççĕ,
Тухса кайнă килтен.

Вĕсене ирĕн-каçăн
Чăтайми эс кĕтен.
Сухаланă пит тарăн
Сăн питне хура шур.
Çÿçÿнте сан, мăнтарăн,
Пурнăç пурçăнĕ пур.

## Словарь ĕçĕ

**сана вăхăт илеймĕ ачусен чĕринчен** — твой образ навсегда останется в сердцах детей
**сухаланă пит тарăн сăн питне хура шур** — жизненные невзгоды оставили глубокие морщины на твоем лице
**çÿçÿнте сан, мăнтарăн пурнăç пурçăнĕ пур** — в твоих волосах, родная, серебрится жизни нить

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Аннене мĕншĕн суйламаççĕ, мĕншĕн хурламаççĕ?
2. Поэт амăшĕ çинчен мĕнле ăшă сăмахсем калать? Тупса вулăр.
3. Амăшĕ хăйĕн ачисене чăтайми кĕтни сăввăн хăш йĕркисенче палăрать? Тупса вулăр.
4. Çак йĕркесене хăвăр сăмахсемпе ăнлантарса парăр: *«Сухаланă пит тарăн Сăн питне хура шур. Çÿçÿнте сан, мăнтарăн, Пурнăç пурçăнĕ пур»*.
5. Сăвва мĕншĕн «Анне — пирĕн тĕнче» тесе ят панă?

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр, пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр.*

1. Аçу-аннÿ пур чухне пыр та тутă, … та типĕ.
2. Ашшĕ-амăшĕн сăмахне итлемен ача-пăча хăй … хăй çухатать.
3. Виççĕри ывăл ача ашшĕне пулăштăр, виççĕри хĕр ача … пулăштăр.
4. Вата çынна хĕрхенмесен хăвна ватлăхра … килĕ.
5. Вата çынтан ан кул — ху та … пулăн.

*Кирлĕ сăмахсем:* амăшне, ватă, çи-пуç, пуçне, йывăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

*Панă ĕçсенчен пĕрне суйласа илĕр:*

1. «Юратнă анне» пысăках мар текст калăплăр.
2. «Анне» темăпа пысăках мар сăвă калăплăр.

3. Хӑвӑр аннӗр ҫинчен каласа парӑр.

**Константин Ушинский**
**(1824 – 1870)**



***Константин Дмитриевич Ушинский*** *— вырӑссен паллӑ вӗрентӳҫи, Раҫҫейре педагогика ӑслӑлӑхне пуҫарса яраканӗ, ҫыравҫӑ. Вӑл Ярославль хулинчи юридици лицейӗнче, шалти ӗҫсен Министерствинче (Министерство внутренних дел), тӑлӑх ачасен институтӗнче вӗрентекенре тата инспекторта ӗҫленӗ. Паллӑ вӗрентӳҫӗ хӑйӗн киленӗвне «Библиотека для чтения» тата «Современник» литература журналӗсенче ӗҫлеме пуҫласан тупнӑ. Ачасем валли калавсемпе юмахсем ҫырнӑ. Паллӑ хайлавӗсем: «Ваҫук» (Вася), «Хӗвелпе ҫил» (Солнце и ветер), «Икӗ качака путекки» (Два козлика), «Икӗ сухапуҫ» (Два плуга), «Тӑрнапа хур кайӑк» (Журавль и цапля), «Ҫуркунне» (Весна). Педагогика ӗҫӗнче палӑрнӑ вӗрентӳҫӗсене К.Ушинский ячӗллӗ медале парса чыслаҫҫӗ.*

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

1. Кам вӑл Константин Ушинский?
2. Паллӑ вӗрентӳҫӗ ачасем валли мӗн ҫырнӑ?

## КӖТМЕ ПӖЛ
*Юмах*

Пурӑннӑ тет аппӑшӗпе шӑллӗ — автанпа чӑх. Акӑ пӗррехинче автан пахчана чупса тухать те симӗс хурлӑхан ҫиме пуҫлать. Чӑх ҫапла ӑс парать:

— Шӑллӑмҫӑм, ҫырлана ан ҫи. Хурлӑхан пиҫсе ҫитет те — ҫиетӗн.

Анчах шӑллӗ аппӑшне итлемест. Симӗс хурлӑхана сӑхать те сӑхать. Ҫисе тултарать те чирлесе ӳкет.

— Ах! — кӑшкӑрать автан. — Ма ҫирӗм-ши? Хырӑм ыратать, аппамҫӑм, питӗ ыратать!

Чӑх хӑйӗн шӑллӗне курӑк чейӗ вӗретсе ӗҫтерет те, автан сывалать.

Тепрехинче автан хире тухать. Чупкалать, сиккелет хӑй. Вылять-вылять те тарлать. Ҫырмана анса сивӗ шыв ӗҫме тӑрать. Аппӑшӗ ӑна каллех чарасшӑн:

— Сивӗ шыва ан ӗҫ, шӑллӑмҫӑм, чирлетӗн, — тет.

Шӑллӗ каллех итлемест. Пӑр пек сивӗ шыв ӗҫсе чирлесе ӳкет.

Тухтӑр автана йӳҫӗ эмел ҫырса парать. Нумайччен сипленет кайӑк. Хӗл ларас умӗн тин сывалать вӑл. Хирти юхан шыв пӑрпа витӗннине курать. Автан конькипе ярӑнма шутлать.

— Шӑллӑмҫӑм, пӑр ҫӳхе, халех ан ярӑн, путса вилетӗн, — тет чӑх…

## Словарь ӗҫӗ

**ӑс парать** — поучает
**сӑхать** — клюёт
**ҫисе тултарать** — наедается
**йӳҫӗ эмел ҫырса пар** — назначает горькое

лекарство

**юхан шыв пăрпа витĕннине курать** — видит, что река покрылась льдом

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Юмахри автанпа чăх сăмахĕсен партитурине тăвăр, илемлĕ вуласа парăр.

## ЫЙтусемпе ĕçсем:

1. Юмах мĕн çинчен?
2. Автан миçе хутчен чирлесе ӳкнĕ? Мĕншĕн?
3. Автана аппăшĕ мĕнле-мĕнле сипленĕ? Каласа тухăр.
4. Автан хăçан сывалнă?
5. Мĕншĕн юмах вĕçĕнче нумай пăнчă лартнă-ши?
6. Мĕнле шутлатăр: автор юмах урлă вулакана мĕн каласшăн-ши?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Чĕр чунсем çинчен мĕнле юмахсем пĕлетĕр? Каласа тухăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

Çемье çинчен калакан ваттисен сăмахĕсене тупса çырса илĕр. Юмахăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр.

## Пултарулăх ĕçĕ

1. Вуланă юмаха вĕçлĕр.
2. Çемье çинчен пысăках мар калав çырăр. Ваттисен сăмахĕпе усă курса ят парăр.

# УСАЛ ĔÇПЕ ЫРĂ ЯТ ИЛЕЙМĔН — АВТОРИТЕТ ДЕЛАМИ БЕРЕГУТ

## Геннадий Волков
## (1927-2010)



***Геннадий Никандрович Волков*** *– тĕпчевçĕ, педагог, çыравçă, куçаруçă, литература критикĕ, академик. Чăваш педагогика институтĕнче, Раççей Федерацийĕн çутĕç министерствинче, Эрфуртри аслă педагогика шкулĕнче вĕрентнĕ. Педагогикăра кăна мар, литературăра та тивĕçлĕ ĕçленĕ. Паллă академик ачасем валли калавсем, притчăсем çырнă.*

*Геннадий Волков К.Д. Ушинский ячĕллĕ премин лауреачĕ, ылтăн медальсене тивĕçнĕ. Чăваш Республикипе Калмăк Республикин хисеплĕ çынни пулнă. Геннадий Волков 500 ытла ăслăлăх ĕçĕн авторĕ. Вăл К.В. Иванов, И.Я. Яковлев, Çеçпĕл Мишши, П.П. Хусанкай, А.С. Пушкин, Л.Н. Толстой пултарулăхĕсене тĕпченĕ. Паллăрах кĕнекисем: «Этнопедагогика», «Асанне калавĕсем» (Бабушкины сказки), «Туслăхра — вăй» (Сила — в дружбе). Хисеплĕ вĕрентекенĕн хайлавĕсенче чăн пурнăç, ăса вĕрентни, сапăрлăх темисем паллă вырăн йышăнаççĕ.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Кам вăл Геннадий Волков?
2. Вăл педагогика ăслăлăхĕнче мĕнле юхăм пуçарса янă?
3. Паллă академик литературăра ытларах хăш жанрта ĕçленĕ?

## ÇИЛ-ТĂВĂЛ
*Хайла*

Çанталăк сивĕ тăнă. Куç уçма çук çил-тăман вĕçтернĕ. Çав вăхăтра пĕр çамрăк çын урампа иртсе пынă та пĕрене çинче ларакан старике курах кайнă. Старик темĕн çинчен шухăшланă пулнă.

Çамрăк çын старик патне пырса:

— Мучи, мĕн туса ларатăн урамра çак çил-тăман вăхăтĕнче? — тесе ыйтнă.

— Эй, ачам, — тенĕ ват çын, — эсĕ пурнăçа чухласа илейместĕн-ха. Тулти çил-тăвăл мĕн вăл? Пӳртре ав ывăлăмпа кинĕм харкашаççĕ: ку чăнласах та хăрушă çил-тăвăл. Яланах асту, ачам: тулти çил-тăвăл килтинчен лăпкăрах. Кил-йышра харкашу тухсан çуртран тухса тарас килет.

Çаплах пуль çав. Ĕлĕкех ваттисем: «Кил-йышпа пĕрле пулсан çеç ăш-чик лăпкă пулать», — тесе ахальтен каламан-çке. Чăнах, кил-йышра тату пурăннине ним те çитмест иккен.

## Словарь ĕçĕ

**куç уçма çук — нельзя раскрыть глаза**
**курах кайнă** — увидел
**темĕн çинчен шухăшлана пулнă** — о чем-то думал
**çил-тăман** — метель
**пурнăçа чухласа илейместĕн-ха** — не поймешь жизненные трудности
**ывăлăмпа кинĕм харкашаççĕ** — сын со снохой ссорятся
**килтинчен лăпкăрах** — тише домашнего
**кил-йышра харкашу тухсан** — если в семье возникает ссора
**тухса тарас килет** — хочется сбежать
**кил-йышра тату пурăннине ним те çитмест** — Ничего нет лучше, чем лад в семье

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Хайлавра (притчăра) миçе сăнар?
2. Çанталăк мĕнле тăнă?
3. Урампа иртсе пынă çамрăк çын кама курнă?
4. Çамрăк çын ват çынран мĕн ыйтнă?
5. Ват çын мĕн хуравланă? Тупса вулăр.
6. *«Тулти çил-тăвăл килтинчен лăпкăрах»*, — тет ват çын. Эсир ват çын сăмахне мĕнле ăнланатăр?
7. Хайла (притча) авторĕ ват çын сăмахĕсене пĕтĕмлетсе мĕн калать? Тупса вулăр.
8. Хайлан (притчăн) тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать-ши?
9. Хайлава (притчăна) мĕншĕн «Çил-тăвăл» ят панă?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Мĕн вăл хайла (притча)? Çак жанрпа ытларах ăçта усă кураççĕ?
2. Эсир Геннадий Волковăн хăш притчисене вуланă?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсене чăвашла куçарăр е тӳр килекен чăвашла ваттисен сăмахĕсене тупăр.*

1. Не будет добра, коли в семье — вражда.
2. На что и клад, когда в семье лад.

**Речевая характеристика** — это речевой портрет. Характеристика персонажа литературного произведения через его речь.

**Пуплев характеристики** — литература хайлавĕнчи персонажа унăн пуплевĕ урлă кăтартса пани.

# ĔÇ ÇЫННА ИЛЕМ КӲРЕТ — ТРУД КРАСИТ ЧЕЛОВЕКА

**Константин Иванов**
**(1890-1915)**

*К.В. Иванов çырнă чи паллă хайлав — «Нарспи» поэма. Чăвашра çак поэмăна вуламан е ун çинчен илтмен çын çук та пулĕ. «Нарспие» ытти халăх çыннисем те пĕлеççĕ. Ăна вырăс, пушкăрт, тутар, мари, удмурт, венгр, акăлчан, нимĕç, эсперанто, француз, азербайджан, пăлхар, турккă ... пурĕ алă ытла чĕлхене куçарнă. Пушкăрт халăх сăвăçи, Мустай Карим, К. В. Ивановăн вилĕмсĕр поэмине палăртса: «Калама çук чаплă, асамлă, хăватлă япала пур. Мана вăл тахçантанпах ĕнтĕ хăйĕн хăвачĕпе тыткăнлать, тĕлĕнтерет. Унăн ячĕ — Константин Иванов. Çапларах каламалли сăлтавĕ — унăн аякка-аякка сарăлнă чапĕ кăна мар, çав хăватлă япалан таçтан-таçтан курăнакан çути, янравлăхĕ, сиплĕхĕ, поэт кĕнекисен кашни йĕрки. «Нарспие» пушкăртла куçараканĕсенчен пĕри пулнă май, эпĕ, çак шедевра алла тытсанах, унти йĕркесене вулама тытăнсанах, хамшăн чăн-чăн уяв çитнине чухласа илтĕм. Иванов вăл — нацин ирĕке тухнă пултару туйăмĕ калама çук вăйлăн палăрни. Вăл чăваш чĕлхи ĕмĕр-ĕмĕр пурăнассине, чечекленсе, хăватланса пырассине пĕлтерекен паллă», — тесе çырнă.*



П.Сизов. Нарспи

## ЫЙтусемпе ĕçсем:

1. Эсир К.В. Ивановăн хăш-хăш хайлавĕсене пĕлетĕр?
2. «Нарспи» поэмăна мĕнле-мĕнле чĕлхене куçарнă?
3. Вырăсла «Нарспи» поэмăна ултă çыравçă куçарнă? Эсир вĕсенчен хăшĕсене пĕлетĕр?
4. Пушкăрт халăх сăвăçи Мустай Карим «Нарспи» поэмăна мĕншĕн шедевр тесе хаклать?

### САРĂ ХĔР

*«Нарспи» поэма сыпăкĕ*

Ирех тăрать, тумланать,
Нарспи ĕçе тытăнать:
Е пурçăн çип илет те
Юрла-юрла тĕрĕ тăвать.

Е çĕлеме ларать те,
Çĕвви шăрça пек пулать —
Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă
Пĕр кĕрет те пĕр тухать.

Е пир тĕртме ларать те
Вылянтарать ăсине.
Е хултăрчă тытать те
Çипне тиет çĕррине.

Е сак çинчи кушакĕ
Питне çăва пуçласан,
Апат хатĕр хăнашăн
Алли-ури çămăлран...

Аван иртрĕ пурăнăç
Хĕрĕн çулĕ туличчен,

Ашшĕ килне хăтана Çичĕ ютран киличчен.

### Словарь ĕçĕ

**сÿс хÿреллĕ хурçă йытă** — иголка с ниткой
**пир тĕрт** — ткать холст
**ăса** — челнок
**хултăрчă** — скальница (в ткацком деле)
**çĕрĕ** — цевка, катушка (в ткацком деле)
**хăтана çичĕ ютран киличчен** — пока не пришли сватать чужие люди

### ЫӀйтусемпе ĕçсем:

1. Нарспи ĕçчен хĕр-и?
2. Вăл мĕн-мĕн тума пĕлет? Поэма сыпăкĕпе усă курса каласа тухăр.
3. Эсир мĕн-мĕн тума пĕлетĕр?
4. *«Алли-ури çăмăлран»* тенине эсир мĕнле ăнланатăр? Мĕншĕн «*сак çинчи кушакĕ питне çăва пуçласан*» хăна валли апат хатĕр?
5. Поэма сыпăкĕнчи ĕç хатĕрĕсене каласа тухăр, словарьпе усă курса вырăсла куçарăр.

### Хăвăра тĕрĕслĕр

Нарспи ят мĕнле пайсенчен тăрать?

### Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Поэма сыпăкĕн партитурине тăвăр, пăхмасăр калама вĕренĕр.

### Халăх ăс-хакăлĕ

*Икĕ юпари сăмах майлашĕвĕсене çыхăнтарса ваттисен сăмахĕсем йĕркелĕр:*

1. Шухăшламасăр тунă ĕçшĕн …
2. Ĕçе тума тытăниччен …
3. Телее шан, …
4. Тытман упан …
5. Кахалшăн çĕр кĕске, …

1. ĕçлеме те ан ÿркен.
2. кайран ан ÿкĕн.
3. ĕçченшĕн кун кĕске.
4. тирне ан сÿ.
5. малтан шухăшлас пулать.

### Пултарулăх ĕçĕ

1. Хĕр ачасем валли ĕç: Н.И. Ашмаринăн 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» словарĕпе усă курса *Нарспи* ят пĕлтерĕшне çырса илĕр.
2. Арçын ачасем валли ĕç: Н.И. Ашмаринăн 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» словарĕпе усă курса *Тăхтаман* ят пĕлтерĕшне çырса илĕр.

### Ӳнер тата сăмах тĕнчи

Интернет уçлăхĕнчен К.В. Ивановăн «Нарспи» поэми тăрăх ÿкернĕ чăвашсен паллă ÿнерçисен ячĕсене çырса илĕр, каласа пама хатĕрленĕр.

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĚ, ЙĂЛИ-ЙĚРКИ — ОБЫЧАИ И ТРАДИЦИИ ЧУВАШСКОГО НАРОДА

## Александр Артемьев
## (1924 - 1998)



***Александр Спиридонович Артемьев*** *— чăваш халăх çыравçи, сăвăçă, литература тишкерӳçи, куçаруçă. Тăван ялĕнчи вулав çуртĕнче, «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче вăй хунă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă, аманнă. Прозăра кăна мар, поэзире те, куçарура та тивĕçлĕ ĕçленĕ. А. Пушкин, М. Лермонтов, И. Тургенев, Л. Толстой, И. Гёте хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Унăн сăввисемпе чăваш композиторĕсем юрăсем хывнă.*

*Александр Артемьевăн пĕрремĕш кĕнеки «Ан авăн, шĕшкĕ» ятпа тухать. Кĕнекери калавсенче автор пирĕн салтаксен вăрçăри паттăрлăхне кăтартса панă. Çыравçăн паллăрах хайлавĕсем: «Ан авăн, шĕшкĕ» (Не гнись, орешник) калав, «Симĕс ылтăн» (Зеленое золото), «Тăвăл умĕн» (Перед бурей) романсем. Александр Артемьев хăйĕн хайлавĕсенче пирĕн салтаксен вăрçăри паттăрлăхне, вăрçă хыççăнхи пурнăçа çырса кăтартнă.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Александр Артемьевăн пултарулăхĕ хăш-хăш жанрсенче палăрнă?
2. Вăл камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?
3. Çыравçăн пĕрремĕш кĕнеки мĕн ятпа пичетленсе тухнă?

## АНТУН ПĔВИ
*Калав*

Антун чухăн çын ачи пулнă. Вăл ялти пуян çын хĕрне Эрпикене юратнă. Ку хĕр хăй чиперрипе тата пуяннипе питĕ мухтаннă. Эрпике хытă чĕреллĕ тата çăмăл ăсласкер пулнă. Вăл каччăсенчен кулнă çеç. Анчах Антун та питĕ мăн кăмăллă пулнă. Вăл çак хĕр умĕнче ытти каччăсем пек мĕскĕнленмен.

Пĕррехинче Эрпике пĕве хĕрринче кĕпе çунă. Темиçе каччă курнăçланса хĕр умĕнче пĕве урлă ăмăртмалла ишсе каçнă. Эрпике шӳтлесе çапла каласа хунă:

— Сирĕнтен хăшĕ пĕве урлă каллĕ-маллĕ çичĕ хут пĕр канмасăр ишсе каçать, çавă манăн мăшăр пулĕ.

Тытăнаççĕ хайхи яшсем ăмăртма! Пĕр-иккĕ хутласан пурте ывăнса çитеççĕ. Мăн кăмăллă Антун çеç çаплах ишет. Вăл халтан кайнă ĕнтĕ, аран-аран сывлать, шывпа чыхăнать, пурпĕр малаллах ишет.

Вăл пĕве урлă улттăмĕш хут каçсан пурте:

— Çĕнтертĕн, Антун! Çитет! — тесе кăшкăраççĕ.

— Çитĕ ĕнтĕ. Эсĕ çĕнтертĕн, Антун, — тет Эрпике те.

Анчах мăн кăмăллă каччă каллех шыва сикет те ишме пуçлать. Пĕве çуррине, чи тарăн вырăна, аран-аран çитет те вăл ишейми пулать. Вара çавăнтах путса çухалать. Каччăсем ăна чăмса шыраççĕ — тупаймаççĕ. Юлашкинчен пĕвене татса яраççĕ. Шыв юхса пĕтсен Антуна çерем çинче те йăвантараççĕ, шăналăк çине хурса та силлеççĕ. Пурпĕрех чĕртеймеççĕ.

Телейсĕрскере вара çакăнтах, пĕве хĕрринех, пытараççĕ. Тăпри çине юпа лартаççĕ. Халĕ вăл юпа та çук ĕнтĕ. Тахçанах çĕрсе кайнă. Нимĕн те юлман Антунран. Ячĕ çеç халăх асĕнче упранать.

## Словарь ĕçĕ

**хытă чĕреллĕ** — жестокосердечный (-ая)
**çăмăл ăслă** — легкомысленный
**мăн кăмăллă** — гордый
**мĕскĕнленмен** — унижаться
**курнăçлан** — кокетничать
**ăмăртмалла ишсе каç** — переплыть наперегонки
**халтан кай** — выбиться из сил
**пĕр-иккĕ хутласан** — переплыв один-два раза туда и обратно
**шывпа чыхăнать** — захлебывается водой
**чăмса шыраççĕ** — искать ныряя
**пĕвене татса яраççĕ** — снесли пруд
**шăналăк** — полог
**халăх асĕнче упранать** — храниться в народной памяти

## ЫIйтусемпе ĕçсем:

1. Антун мĕнлерех кăмăллă? Эрпике мĕнлерех кăмăллă?
2. Антун Эрпике умĕнче мĕскĕленнĕ-и?
3. Пĕве хĕрринче чухне Эрпике каччăсене мĕн каланă?
4. Каччăсем мĕн чухлĕ ишейнĕ? Антун миçе хутчен ишсе каçнă?
5. Мĕншĕн ывăнса çитнĕ Антун малаллах ишнĕ?
6. Ăна шывран мĕнле кăларнă?
7. Антуна мĕншĕн пĕве хĕрринех пытарнă?
8. *Шывăн турачĕ çук* текен ваттисен сăмахне шута илсе шыва кĕме кайсан хамăра мĕнле тытмалла?

## Пултарулăх ĕçĕ

Вуланă калавпа усă курса танлаштару таблицине тултарăр:

| Антун | Эрпике |
|---|---|
| Чухăн çын ачи, … | Пуян çын хĕрĕ, … |

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Панă сăмахсенчен ваттисен сăмахĕ пуçтарăр.*

Вилет, мул, вилет, ыр, çын, пуян, юлать, юлать, ят.

# ÇУРХИ КУН – КАПĂР —
# МАТУШКА ВЕСНА ВСЕМ КРАСНА

## Мĕтри Кипек
## (1913-1991)



***Мĕтри Кипек** **(Дмитрий Афанасьевич Афанасьев)*** — *чăваш прозăçи. Шкулта, çар юстицийĕн тытăмĕнче вăй хунă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă. Мĕтри Кипек К.В. Иванов ячĕпе хисепленекен тата Чăваш Республикин патшалăх премисен лауреачĕ. Паллăрах произведенийĕсем: «Тăван çĕршывшăн» (За Родину) калав, «Кайăк тусĕ» (Друзья природы) повесть, «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» (Герои без вести не проподают), «Парăнманнисем çĕнтереççĕ» (Кто не сдаётся, тот побеждает) романсем. Мĕтри Кипек хăйĕн хайлавĕсенче çут çанталăк тата вăрçă темисене хускатнă.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Мĕтри Кипек хăйĕн хайлавĕсенче мĕнле темăсем хускатнă?
2. Çыравçăн паллăрах хайлавĕсене калăр.

## ÇУРХИ ВĂРМАНТА

*Калав*

Тахçантанпа кĕттерсе ывăнтарнă пуш уйăхĕ ăшшăн кулса килчĕ. Вара пурте хавасланса ӳкрĕç. Шур çитти айĕнчи тӳлеккĕн тĕлĕрекен çĕр мучи пĕр айăк çинчен тепĕр айăк çине çавăрăнса выртрĕ. Кăн-кăвак тӳпе тата çӳлерех çĕкленнĕн курăнакан пулчĕ. Сарă хĕвел çутă йĕпписемпе пăрлă сухаллă Хĕл Мучие хĕрхенӳсĕр йĕплесе çурçĕр еннелле хăвалама тытăнчĕ.

Сивĕ хĕл çапах та парăнасшăн мар, кăнтăрла каялла чакнă пек пулать те каçпа тепĕр хут таврăнса шăнтса пăрахать. Чăн-чăн çуркунне ака уйăхĕн малтанхи эрнинче тин кайăк-кĕшĕкпе пĕрле савăнăçлăн чĕвĕлтетсе персе çитрĕ. Вара пурте хĕл ыйхинчен вăранчĕç. Çырмасемпе варсенче шыв шăнкăртататать. Хура вăрман ăшă енчен таврăннă кайăксен ытарма çук илемлĕ юррипе тулать. Уйсемпе çеçен хирсем шурă пĕркенчĕкне сирсе симĕс тум тăхăнаççĕ.

— Çуркунне çитрĕ! Килчĕ ырă çуркунне! — хавасланса ӳкрĕ ача-пăча.

Ваттисем çуркунне çитнине ĕненесшĕн мар.

— Савăнма иртерех-ха, — теççĕ вĕсем. — Васкаса килнĕ çуркунне вăрăма каякан. Хĕлĕн вăйĕ часах пĕтекен мар, чакĕ-чакĕ те тепĕр хут таврăнма тапаçланса пăхĕ. Пурне те курăпăр-ха: çĕр шăтнине те, юр çунине те. Çут тĕнче хăй вăхăтне лайăх пĕлет.

## Словарь ĕçĕ

**кĕттерсе ывăнтарнă** — здесь: заставив ожидать (подожать)
**ăшшăн кулса килчĕ** — наступил с приветливой улыбкой
**шур çитти айĕнчи** — под белым покрывалом
**тÿлеккĕн тĕлĕрекен** — безмятежно дремлющий
**пĕр айăк çинчен тепĕр айăк çине** — с одного бока на другой бок
**хĕрхенÿсĕр йĕплет** — безжалостно щиплет
**çырмасемпе варсем** — овраги и балки
**таврăнма тапаçланса пăхĕ** — постарается вернуться

## ЫÎйтусемпе ĕçсем:

1. Калавра çĕр мучи мĕн айĕнче тĕлĕрет тенĕ?
2. Эсир «*шур çитти айĕнче*» тенине мĕнле ăнланатăр? «Шур çитти айĕнче» тенине урăхла мĕнле калама пулать-ши?
3. Сарă хĕвел Хĕл Мучие ăçта хăвалама тытăнчĕ? Мĕншĕн?
4. Сивĕ хĕлпе çуркунне хушшинчи кĕрешĕве автор мĕнле сăнласа панă? Çав йĕркесене вуласа парăр.
5. Чăн-чăн çуркунне хăçан пуçланать-ши?
6. Çуркунне çитсен «*пурте хĕл ыйхинчен вăранчĕç*» тенĕ калавра? Çуркунне çут çанталăк мĕнлерех улшăнать-ши? Калаври тĕслĕхсемпе усă курса хуравлăр.
7. Ваттисем çуркунне çитнине ĕненесшĕн-и? Мĕншĕн?

Анчах кăçал çут çанталăк çуркунне майлă пулчĕ курăнать. Сивĕ хĕл йĕре-йĕрех çурçĕр еннелле тарчĕ. Часах юр кайса пĕтрĕ, ака уйăхĕн виççĕмĕш эрнинче вара пĕрремĕш хут аслати кĕмсĕртетрĕ. Ытти çулхипе танлаштарсан ку икĕ эрне маларах пулчĕ ĕнтĕ. Çапах та аслатиллĕ çумăр чашлаттарнă хыççăн çуркунне пĕтĕмпех çĕнтернине пурте пĕлеççĕ. Вара пĕтĕм тĕнче чуна çĕклентерекен симĕс тумтир тăхăнчĕ.

Пĕр хĕвеллĕ ăшă кун ачасем вăрмана серте татма тесе кайрĕç. Ай, ырă вăрманта! Тин çеç çулçă кăларнă туратсем хушшинче шăнкăрчсем, хура кураксем, вĕлтрен тăррисем тата ытти çĕр тĕрлĕ чĕвĕлти кайăк ытарма çук илемлĕ юрăсем шăрантараççĕ. Ытти чĕр чунсем те çунатлă хăнасенчен юласшăн мар. Тутлă шăршă саракан çĕмĕрт çеçки ăшĕнче пыл хурчĕсем, тĕкĕл турасем нăрлаççĕ. Йĕплĕ тумтир тăхăннă чĕрĕп йăвинчен тухнă та хĕвел ăшшинче йăваланса выртать. Йăптăх тăкакан тилĕ, хĕрлĕ кĕрĕкне тасатас тенĕ пек, йывăç вулли çумне тайăннă та айăкне хĕрсех хыçать, унтан çĕре выртса йăваланать. Йăрă калта пĕлтĕрхи типĕ çулçăсене чаштăртаттарса чупать. Кăткăсен туслă йышĕ хĕлле ишĕлкеленĕ çуртне хĕрсех юсать.

Ачасем уçланкă хĕррипе пуçа çĕклемесĕр çÿрерĕç. Кунта çеçпĕл те, шур пуç та темĕн чухлех. Вĕсен илемлĕ çеçкисем инçетренех курăнаççĕ. Сертийĕ тата! Сертийĕ! Ытла та ăнса пулнă кăçал! Нумай çунатлă капăр çулçисене таçта та хăватлăн сарса ларать. Ачасем хутаçĕсене чыхсах тултарчĕç. Чăнах та, унта ĕнтĕ сертепе шур пуç çулçисемсĕр пуçне çиме юрăхсăр курăксем те сахал мар, çапах та хурана лекмеллисем те çителĕклĕ. Халĕ киле таврăнма та

пулать, анчах пĕрин те вăрмантан тухас килмест. Хĕвел питтинче ешерекен пĕчĕк хăртнă ăшне пырса кĕрсен ачасем ял çинчен мансах кайрĕç. Вĕсем симĕс курăк çине тӳнсе кайрĕç те кула-кула йăваланма тытăнчĕç.

## Словарь ĕçĕ

**çут çанталăк çуркунне майлă пулчĕ** — природа поддержала весну
**хĕл йĕре-йĕрех çурçĕр еннелле тарчĕ** — зима в слезах сбежала на север
**аслати кĕмсĕртетрĕ** — прогремел гром
**çумăр чашлаттарнă хыççăн** — здесь: после того как прошел дождь
**юрăсем шăрантараççĕ** — воодушевленно исполняют свои песни
**çунатлă хăнасенчен** — здесь: пернатые гости
**хĕвел ăшшинче йăваланса выртать** — греется на солнце
**йăптăх тăкакан тилĕ** — линяющая лиса
**айăкне хĕрсех хыçать** — чешет спинку
**çĕре выртса йăваланать** — катается по земле
**çулçăсене чаштăртаттарса чупать** — шуршит в листве
**хĕлле ишĕлкеленĕ çуртне хĕрсех юсать** — здесь: ремонтируют обвалившийся за зиму муравейник
**йăваланма тытăнчĕç** — начали кувыркаться (кататься) на земле

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Калаври çуркунне ытти çулхинчен маларах е каярах çитнĕ-и?
2. Çуркунне хĕле çĕнтернине ăçтан курма пулать? Çав вырăна тупса вуласа парăр?
3. Çурхи вăрманта мĕнле тискер кайăксемпе чĕрчунсене курма пулать? Вĕсен ячĕсене вырăсла куçарăр.
4. Çурхи вăрманта мĕнлерех улшăнусем пулса иртеççĕ? Тупса вуласа парăр.
5. Ачасем вăрманта мĕн тунă? Вĕсен мĕншĕн килелле таврăнас килмест?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Калавăн темине палăртăр.
2. Вуланă калавра автор çурхи вăрмана сăнласа парать-и? Е çурхи вăрман çинчен каласа парать-и?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр.*

1. Ир пулать те, каç пулать — … иртни сисĕнмест.
2. Ура утсан … юлать.
3. Çурхи кун … тăрантарать.
4. Вун тăваттă çапмасăр Атăл … тапранмасть.
5. Çуркунне пир кирлĕ, кĕркунне … кирлĕ.

*Усă курмалли сăмахсем:* пăрĕ, ĕмĕр, тир, çулталăк, çул

## Куçма Турхан
## (1915-1988)



***Куçма Турхан (Сергеев Кузьма Сергеевич)*** *— чăваш çыравçи, куçаруçă. Шкулта ачасене вĕрентнĕ, Чăваш АССРĕн Совнарком çумĕнчи Радиоинформаци комитетĕнче, Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕнче, Чăвашглавлит пуçлăхĕнче, çыравçăсен Пĕрлешĕвĕн консультантĕнче вăй хунă. Анăç Белоруссине ирĕке кăларакан похода, финн вăрçине хутшăннă. Прозăра кăна мар, публицистикăра та, куçарура та тивĕçлĕ ĕçленĕ. Н. Гоголь, К. Симонов, С. Григорьев хайлавĕсене чăвашла куçарнă. Куçма Турханăн пĕрремĕш кĕнеки «Атакăра» ятпа тухать. Кĕнекери калавсемпе очерксенче автор пирĕн салтаксем Анăç Белоруссипе Анăç Украинăна ирĕке кăларнине тата финн вăрçине кăтартса панă. Çыравçăн паллăрах хайлавĕсем: «Атакăра» (В атаке) калав, «Йăмраллă ял» (Деревня в ветлах), «Сĕве Атăла юхса кĕрет» (Свияга впадает в Волгу) романсем.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Куçма Турхан çырнă хайлавсенче мĕнле темăсем паллă вырăн йышăнаççĕ?
2. Çыравçă камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?

## ÇУРКУННЕ
*Калав*

Çуркунне…

Таврара пур çĕрте те юр выртать-ха. Анчах вăл йăшнă ĕнтĕ, хĕвел питтинче ура йĕпенмелĕх сĕлкĕшленнĕ. Тӳпене кăн-кăвак теме çук. Типме тухса çакнă кĕпе пек, унта та кунта кăтрашка пĕлĕтсем çакăнса тăраççĕ. Çапах та тӳпе кунсеренех тăрăлса, тасалса пырать.

Темиçе хутчен çурхи çумăр çуса иртрĕ. Юр татах пусăрăнчĕ. Çĕрле шанк шăнтса лартрĕ. Çулсем пăрланчĕç. Тулли лав иртет — ытлашши сасă тумасть, хыçлă çуна иртет — пуш пичке пек тăнкăртатать.

Çӳлте-çӳлте кăнтăр енчен таврăнакан кайăк хурсем вĕççе иртеççĕ. «Кайри — мала! Малти — кая!» — ыră сунса кăшкăраççĕ вĕсене ачасем.

Çуркунне…

Ак ĕнтĕ хирте юртан тасалнă çара вырăнсем — «тăм çамкисем», «кăмака çийĕсем» — курăнаççĕ. Çырма айккисем — чăнкă çырансем те тăмпа хĕп-хĕрлĕ хĕрелселарнă. Унта ама хупахĕ чечек кăларма ĕлкĕрнĕ. Сап-сарă хăй, илемлĕскер. Пĕрре те вĕçкĕн мар вăл, çапах куçа илĕртет.

Пӳрт умне малтанхи ешĕл курăк тапса тухнă. Черченкĕ те сип-симĕс. Ячĕ те мĕнле ачаш унăн: чемчен курăкĕ.

Хӳме ҫумӗнче вӗлтӗрен ҫӳлелле кармашать. Ырӑ курӑках халь вӑл – яшкана ярса ҫиме те пулать. Унпа юнашар шӑнӑр курӑкӗ ҫулҫӑ сарнӑ, тал пиҫен пуҫне кӑларать.

Ҫуркунне…

Сар хӗр пек кулса пӑхакан хӗвел пурне те: ваттине те, вӗттине те тулалла йыхӑрать.

## Словарь ӗҫӗ

**йӑш** — обессиливать
**хӗвел питтинче** — на солнцепёке
**сӗлкӗшлен** — превращаться в месиво из снега и воды, в кашицу
**кӑтрашка пӗлӗтсем** — кучевые облака
**тӑрӑлса, тасалса пыр** — становиться прозрачным; очищаться
**юр пусӑрӑнчӗ** — снег уплотнился
**тулли лав** — полная телега
**хыҫлӑ ҫуна** — санки с задком
**тӑнкӑртат** — грохотать
**тӑм ҫамки** — *букв.* глиняный лоб
**кӑмака ҫийӗ** — поверхность печки
**вӗҫкӗн мар** — не хвастливый
**чемчен курӑкӗ** — птичья гречишка
**шӑнӑр курӑкӗ** — подорожник
**тал пиҫен** — татарник

## Ыйтусемпе ӗҫсем:

1. Калавра ҫуркуннен хӑш тапхӑрӗ сӑнланнӑ? Ҫур пуҫламӑшӗ-и? Е ҫур вӗҫӗ-и? Ҫакна мӗнле паллӑсенчен ӑнлантӑр?
2. Автор ҫурхи тӳпене мӗнле сӑнарланӑ? Тупса вулӑр.
3. Ҫуркунне юр мӗнлерех улшӑнать? Ҫак улшӑнӑва автор мӗнле сӑнланӑ?
4. Пӗрремӗш курӑка, чечеке сӑнланӑ вырӑнсене тупса вулӑр.
5. Юр кайнӑ вырӑнсем калавӑн хӑш йӗркисенче палӑраҫҫӗ? Ҫак йӗркесене хӑвӑр сӑмахсемпе ӑнлантарӑр.
6. Ҫуркуннене автор мӗнле кӑмӑлпа сӑнлать?
7. Калавра танлаштарусем пур-и? Пур пулсан тупса вулӑр. Вӑл йӗркесене эсир мӗнле ӑнланатӑр?
8. Калава вуланӑ хыҫҫӑн куҫ умне мӗнлерех ҫурхи ӳкерчӗк тухса тӑчӗ? Хаваслӑ ӳкерчӗк-и? Е кичем-и? Шавлӑ ӳкерчӗк-и? Е лӑпкӑ-и? Ҫутӑ ӳкерчӗк-и? Е тӗксӗм-и?
9. Н. Овчинников «Ҫуркунне» картинипе паллашӑр. Калаври хӑш предложенисем картинӑпа пӗр килеҫҫӗ? Паллӑ художникӑн ытти ӗҫӗсене аса илӗр.

## Хӑвӑра тӗрӗслӗр

1. Эсир М. Кипекӗн «Ҫурхи вӑрманта» тата К.Турханӑн «Ҫуркунне» калавӗсене вуласа тухрӑр. Ҫак калавсенче авторсем ҫуркуннене сӑнласа параҫҫӗ-и? Е ҫуркунне ҫинчен каласа параҫҫӗ-и?
2. Калавсенче пӗр пеклӗх пур-и? Пур пулсан — мӗнлисем?
3. Кусма Турхан ҫырнӑ калаври *«тӑм ҫамкисем», «кӑмака ҫийӗсем»* тенисене эсир мӗнле ӑнланатӑр?



*Николай Овчинников «Çуркунне»*

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупăр. Калавăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр.*

1. … хăй йăвине сават.
2. … тирне ан сӳ.
3. … пуласси ачаран паллă.
4. … виçĕ чĕлхе — виçĕ ăс.
5. … çулталăк тăрантарать.

## Проект

Çуркуннене сăнлакан пысăках мар текст калăплăр е вуланă калавсенчен пĕрин тăрăх ӳкерчĕк тăвăр.

# КАШНИ КАЙĂК ХĂЙ ЙĂВИНЕ САВАТЬ — ВСЯКИЙ КУЛИК СВОЕ БОЛОТО ХВАЛИТ

## Петĕр Хусанкай

*Петĕр Хусанкай 10 чĕлхе пĕлнĕ чăваш халăх сăвăçи. Вăл вĕсемпе ирĕклĕн калаçма пултарнă. Сăвăçă А.С. Пушкинăн «Евгений Онегин» романне, «Полтава» поэмине, А. Грибоедовăн «Ăса пула инкек» комедине, В. Шекспирăн «Ромеопа Джульетта» трагедине, А. Блокăн «Вун иккĕ» поэмине, М. Горькийăн калавĕсене — чăвашла, К.В. Ивановăн «Нарспи» поэмине вырăсла куçарнă. Унăн хайлавĕсене те куçаруçăсем вырăс, украин, пăлхар, акăлчан, француз, нимĕç, итали, чех, араб, грузи, тутар тата ытти чĕлхисене куçарнă. Петĕр Хусанкай çырнă хайлавсем Раççей литературин ылтăн çӳпçине (фондне) кĕрсе юлнă. Грузи сăвăçи Карло Каладзе П. Хусанкай пирки: «Вăл чăннипех те çут çанталăк тата Турă панă сăвăç», — тенĕ унăн пултарулăхне палăртса. Ăна пурăннă чухнех «туслăхпа мире упракан элчĕ (посол)» тесе хакланă. Вăл Венгрире, Польшăра, Чехословакинче, Румынире, Кубăра пулнă, Болгари çĕр-шывĕн кĕтнĕ хăни пулнă. Çак çĕр-шывсенче вăл хăйĕн тата ытти чăваш çыравçисен сăввисене чăвашла вуланă.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Эсир Петĕр Хусанкайăн хăш хайлавĕсене пĕлетĕр?
2. П. Хусанкай куçару ĕçĕпе ĕçленĕ-и? Хăвăр шухăша тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.
3. К.В. Ивановăн «Нарспи» поэмине тата Çеçпĕл Мишшин сăввисене вырăсла кам куçарнă-ши?
4. Петĕр Хусанкай çырнă хайлавсене хăш-хăш чĕлхене куçарнă?
5. Мĕншĕн П. Хусанкая «туслăхпа мире упракан элчĕ (посол)» тесе хакланă?
6. Чăваш литературинче Петĕр Хусанкай премийĕ пур-и?

### ЙЫХРАВ

Çак çĕре эсир пĕлетĕр-и:
Ватă та вăл, ĕмĕр çамрăк та.
Ăсан туйĕ хӳхĕм çав тери —
Курсан чун киленĕ вăрманта.
Уявра уяв ку çĕршывра,
Ĕçĕпе — хускатĕ вăл тăва!
Кам-ха, кам çак халăха пĕлет:
Вăл çĕр пин сăмахпала пуплет.
Çĕр пин юрă-çемĕ кĕвĕлет,
Çĕр пин тĕслĕ тĕрĕ вăл тĕрлет…
Пырса курăр — йăлт сирĕнпеле
Хатĕр эп тĕрĕслеме пĕрле.

### ПРИГЛАШЕНИЕ В ЧУВАШИЮ

Знаете ли Вы страну такую,
Древнюю и вечно молодую,
Где в лесу тетерева токуют,
Словно песней сердце околдуют,
Где коль праздник — от души ликуют,
Коль работа — гору дай любую!
Знаете ли Вы такой народ,
У которого сто тысяч слов,
У которого сто тысяч песен
И сто тысяч вышивок цветет?
Приезжайте к нам — и я готов
Это все проверить с вами вместе.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăра мĕнле çĕр çинчен калаçу пырать? Раççей çĕрĕ çинчен-и? Е Чăваш Ен çĕрĕ çинчен-и?
2. Автор Чăваш çĕрне мĕнлерех кăмăлпа сăнлать? Мăнкăмăлланса-и? Е вăтанса-и? Ырласа-и? Е хурласа-и?
3. Сăвăç ăсан туйне мĕнлерех сăнланă? Тупса вулăр.
4. Уяв (ĕç, юрă-çемĕ, тĕрĕ) çинчен сăвăра мĕн каланă? Тупса вулăр.
5. Çак çĕрте пурăнакан халăх пирки «*Вăл çĕр пин сăмахпала пуплет*», – тесе çырать П. Хусанкай. Мĕнле халăх пирки тата хăш чĕлхесем çинчен çырать-ши сăвăçă?
6. Сăввăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать?
7. Сăвва мĕншĕн «Йыхрав» тесе ят панă?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

И.Я. Яковлев каланă «Чăвашăн çĕр пин сăмах, çĕр пин тĕрĕ, çĕр пин юрă» сăмахсене ăнлантарăр?

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр, янăравлăхне икĕ чĕлхере те танлаштарăр. Сăвва пăхмасăр калама вĕренĕр.

## Пултарулăх ĕçĕ

Петр Кипарисовăн «К.В. Иванов юрă итлет» картинипе паллашăр, ыйтусемпе усă курса ун тăрăх калаçу тăвăр.



Петр Кипарисов. К.В. Иванов юрă итлет

1. *Картинăра камсене куратăр?*
2. *Вĕсем ăçта пуçтарăннă?*
3. *Художник картинăра мĕнле тĕссемпе усă курнă? Мĕншĕн?*

4. *Мĕнле шутлатăр, улаха çамрăксем хăçан тата мĕн тума пуçтарăннă-ши?*
5. *Картинăри хĕрсем (ват çын, ар çын ача) улахра мĕн тăваççĕ?*
6. *Сирĕн шутпа, К.В. Иванов улаха мĕн тума килнĕ-ши?*
7. *К.В. Иванов чăваш юррисемпе кăткăсланнă-и?*
8. *П. Хусанкай çырнă «Йыхрав» сăввăн хăш йĕркисем картинăпа пĕр килеççĕ?*

Усă курмалли сăмахсем: *улах, ал ĕç тăваççĕ, шăхличĕ калать, итлет, сăпкари ачана çывратать.*

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Чăвашла тата вырăсла ваттисен сăмахĕсен тӳр килĕвĕсене тупăр.*

1. Тăван çĕр-шыв — анне, ют çĕр-шыв — ама çури.
2. Тăван йăваран хакли нимĕн те çук.
3. Кашни кайăк хăй йăвине савать.
4. Тăван кĕтес хăй патнех туртать.
5. Ăçта кăна ан çит, Тăван çĕр-шыва асра тыт.

а) Всякий кулик свое болото хвалит.
ă) Родина — мать, чужбина — мачеха.
б) Много стран прошел, а добро лишь на Родине нашел.
в) Своя земля — свой прах.
г) Нет ничего дороже родного гнезда.

### Любовь Мартьянова
### (1950)



***Любовь Васильевна Мартьянова** — чăваш сăвăçи, калавçи. Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче, Патăрьел районне кĕрекен Турхан вăтам шкулĕнче ĕçленĕ, халĕ «Тăван Атăл» журнал редакцийĕнче ĕçленĕ. Сăвăсем кăна мар, калавсем те çырать. Вăл Митта Ваçлей ячĕллĕ премин лауреачĕ. Паллăрах кĕнекисем: «Эп чĕртнĕ вучах» (Пламень сердце моего), «Сенкер ачалăх» (Голубое детство), «Шурă юр юрри» (Песня белого снега). Любовь Мартьянова пултарулăхĕнчи тĕп темăсем — чăвашăн тĕнчи, чунри асамлăх.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Любовь Мартьяновăн пултарулăхĕ хăш жанрсенче палăрнă?
2. Сăвăçăн пултарулăхĕнче мĕнле темăсем палăрса тăраççĕ?

### ЧĂВАШЛА

Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать,

Шăпчăк та юрлать кунта халь чăвашла.
Сассăм пин чĕлхеллĕ халăх хушшинче
Янăрать хавассăн, уççăн, чăвашла.

Тĕлĕнсе пăхать-ха, тарăхать тăшман:
«Камсемех эсир, — тет, — калăр, хăш йăхран?»
Çак чечеклĕ çĕр пин юрă тĕнчинче
Эп çуралнă. Пĕлĕр — ыр йăхран.

Сăпкари ача та кулчĕ чăвашла.
Хурăнпа йăмра та — кăмăллă йышра.
Ыр телей пилленĕ Аслă Çĕр çинче
Пурăнма çуралнă пурте пĕр йышра.

Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать,
Шăпчăк та юрлать кунта, ав, чăвашла.
Пин чĕлхеллĕ туслă халăх хушшинче
Калаçса çÿретĕп эпĕ — чăвашла.

## Словарь ĕçĕ

**чăвашла кашлать** — шумит по-чуашски
**пин чĕлхеллĕ халăх** — тысячеязычная народность
**хăш йăхран** — с какого рода
**чечеклĕ çĕр пин юрă тĕнчи** — в цветущем краю ста тысяч песен
**сăпкари ача** — ребенок в колыбели
**ыр телей пилле** — пожелать счастье, блгославить

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр, илемлĕ вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Автор шучĕпе Чăваш Енре вăрман мĕнле кашлать, шăпчăк мĕнле юрлать, сăпкари ача мĕнле кулать?
2. Авторăн сасси ытти халăх хушшинче мĕнле янăрать?
3. Автор мĕнле йăхра çуралнă?
4. Сăвăра туслăх çинчен мĕн каланă?
5. Чăваш чĕлхи çинчен хăш йĕркере çырнă? Тупса вулăр.
6. *«Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать,*
*Шăпчăк та юрлать кунта, ав, чăвашла»,* — тенине мĕнле ăнланатăр?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Сĕм вăрман мĕнле кашлать? Сĕм вăрман мĕнле кĕрлет?* Ыйту сăмахĕ вырăнне евĕрлев сăмахĕ лартса вулăр.

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Икĕ юпари сăмах майлашĕвĕсене ҫыхăнтарса ваттисен сăмахĕсем йĕркелĕр, вырăсла куҫарăр.*

1. Тăван ҫĕр-шыв ăшши …
2. Тăван ҫĕр-шывра …
3. Кайăк та хăй чĕпписене …
4. Курман-илтмен кăмака ҫинче выртнă, …
5. Тăван кĕтес …

а) куракан-илтекен Мускава ҫитнĕ.
ă) хĕвел те ăшăрах.
б) хăй патнех туртать.
в) тăшманран сыхлать.
г) ĕмĕр тăршшĕ.

# ÇУТ ÇАНТАЛĂК – ПИРĔН ТĂВАН КИЛ — ПРИРОДА – НАШ ДОМ

## Хветĕр Уяр
## (1914 – 2000)



***Хветĕр Уяр** (**Федор Ермилович Афанасьев**) — чăваш халăх çыравçи. Шкулта, радиокомитетра, кĕнеке палатин директорĕнче, «Капкăн» журнал редакцинче, кĕнеке кăларăвĕнче тăрăшнă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă. Прозăра кăна мар, публицистикăра та, куçару ĕçĕнче те ăнăçлă ĕçленĕ. Н.Г. Гарин-Михайловский, А.П. Чехов хайлавĕсенче чăвашла куçарнă. Хветĕр Уяр «Чăваш Енĕн культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», «Чăваш халăх çыравçи» хисеплĕ ятсене тивĕçнĕ. Паллă произведенийĕсем: «Тăван çĕршыв тăрăх» (По родной стране) очерк, «Сукмак» (Тропа) калав, «Таната» (Тенета), «Таркăн» (Беглец) романсем.*

### Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Хветĕр Уярăн чăн хушамачĕ мĕнле?
2. Унăн пултарулăхĕ хăш-хăш жанрсенче палăрнă?
3. Çыравçă камăн хайлавĕсене чăвашла куçарнă?

## ЮРАТНĂ ЙЫВĂÇ
*Тĕрленчĕк*

Чăвашăн чи юратнă йывăçĕ юман теççĕ. Ăна вăл пуç çапнă. Ăна касса пӳрт тунă, урай сарнă. Юман хуппипе кĕпе-йĕм пĕветнĕ. Чи хăватлă паттăра та чăваш Юман паттăр тенĕ. Вилсен вăл юман тупăк ăшне кĕрсе выртнă.

Хыра та хисеплет чăваш. Пĕлĕте çити ӳснĕ яштака хыр çынна малалла ĕмĕтленме вĕрентет. Пуçна ан ус тет вăл.

Капăр хурăна та, çирĕп вĕренене те, ăвăспа çăкана та юрататпăр эпир. Анчах чăваш пурнăçĕн символĕ йăмрах пек туйăнать мана. Пур çĕрте те йăмра пирĕн: урамра, пӳрт умĕнче, пахчара… Çăва çинче. Ăна ытлашши пăхма кирлĕ мар. Тăпрана та тиркемест вăл. Пĕр-пĕр çĕре пуртă аври пек турат чиксе ларт та — пĕр вун-вун пилĕк çултан йăмра çитĕнсе ларать.

Çуркунне йăмра тăрринче кураксем йăва çавăрса чĕп кăлараççĕ. Шăрăхра вăл сулхăн парнелет, çил-тăвăлра пӳрт-çурта хӳтĕлет.

### Словарь ĕçĕ

**пуç çап** — молиться
**ытлашши пăхма кирлĕ мар** — не требует особого ухода
**тăпрана та тиркемест** — не привередлив к почве
**сулхăн** — тень
**пӳрт-çурта хӳтĕлет** — защищает постройки

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Чăвашăн юратнă йывăçĕсене каласа тухăр.
2. Чăваш юмана (хыра, хурăна, вĕренене, ăвăса, çăкана) мĕншĕн юратнă?
3. Авторшăн чăвашăн чи юратнă йывăçĕ мĕн-ши? Мĕншĕн? Кластер çырса хуравлăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Правилăна малалла тăсăр.*

**Зарисовка (заметка)** – это **... .**
**Тĕрленчĕк —** … .

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупăр. Калавăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахне палăртăр.*

1. …, çил пек усалли çук.
2. … таса шыв.
3. … — икĕ йывăç ларт.
4. … пĕчĕк шывран пуçланать.
5. …, ырă патне пыр.

### Григорий Луч
### (1931-1998)



***Григорий Луч (Григорий Васильевич Васильев)*** *– проза ăсти. Вăл Канаш район хаçачĕн редакциĕнче, «Çамрăк коммунист», «Коммунизм ялавĕ хаçатсенче, «Капкăн» журналта ĕçленĕ. Çыравçă очерксем, калавсем, повеçсем çырнă. Паллă хайлавĕсем: «Ӳркенмен кахал» (Нeленивый лентяй), «Каçарăр, тархасшăн» (Простите ради Бога), «Кайăк тусĕсем» (Друзья птиц), «Тăрнасем» (Журавли). Григорий Луч хăйĕн хайлавĕсенче çутçанталăка туйма вĕрентесси, унăн пуянлăхне упрасси, вăрçă вăхăтĕнчи ĕçсем çинчен çырса кăтартнă.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Григорий Луч хăйĕн хайлавĕсенче мĕн çинчен çырса кăтартнă?
2. Унăн пултарулăхĕ хăш жанрсенче палăрнă?
3. Çыравçăн паллăрах хайлавĕсене калăр.

### ТĂРНАСЕМ
*Калав*

Икĕ тантăш — Петьăпа Ваня — сумкисене илчĕç те пахча витĕр уя тухрĕç. Утнă çĕрте утнă, чупнă çĕрте чупнă пек кайса вĕсем часах ялтан виçĕ çухрăмри вăрмана çитрĕç. Юманлăха кĕрсен тин ачасем сумкисене хулпуççи урлă уртса ячĕç.

Вăрманта лăпкă, çил çук. Кайăксем юрлани те питех илтĕнмест. Тантăшсем васкасах çĕре тăкăннă юман йĕкелĕсене сумкисене яма тытăнчĕç.

Вăхăт иртни те сисĕнмерĕ. Хĕвел анса ларас умĕн кăна Петьăпа Ваня вăрмантан тухса тункатасем çине канма ларчĕç. Уйрăлас килмест кĕрхи вăрмантан. Уçă сывлăш, чăпар вăрман илемĕ чуна илĕртет. Çулçăсене чăштăртаттарса шăвакан калтасене хулăпа хăратса çӳресех пĕр сехет иртрĕ пулĕ. Сумкăсем хулпуççине ыраттарман пулсан, тен, ачасем вăрманта татах çӳренĕ пулĕччĕç.

Нумай та вăхăт иртмерĕ — Ваня кăшкăрса ячĕ:

— Петя, авă унта пăх-ха… тăрнасем!

Чăн та, вăрмантан аяккках та мар, Ясмăк уйĕ текен вырăна, пĕр ушкăн тăрна вĕççе анчĕ.

— Петя, атя патнерх кайса пăхатпăр. Эпĕ вĕсене çывăхран нихçан та курман, — терĕ Ваня.

Ачасем хашка-хашка малалла чупса кайрĕç. Тăвайкки патне çитерехпе Петя Ваньăна чарчĕ:

— Шăп пул, хăраса вĕççе кайма пултарĕç тата. Атя çав шĕшкĕ тĕмĕ патне хырăмпа шуса каяр.

Шĕшкĕ тĕмĕ патне шуса çитме çăмăл пулмарĕ. Кунтан тăрнасем питĕ лайăх курăнаççĕ. Ака вăрăм мăйлă тăрнасем пысăк çунаттисемпе хăлаçланкаласа илчĕç. Унтан пĕрин хыççăн тепри пуçĕсене çуначĕсем айне чикрĕç. Ачасене çакă кайăксем пытанмалла вылянă пек туйăнчĕ.

— Выляççĕ-и? — ыйтрĕ Ваня шăппăн.

— Çук, ывăннă пулас, тĕлĕрсе илесшĕн, — пăшăлтатрĕ Петя.

— Пурте çывăрса кайсан тата çывăхарах пырăпăр-и? — терĕ Ваня.

— Шăплан, авă сасă илтрĕç пулас, кунталла пăхаççĕ, — чарчĕ Петя.

Тăрнасем кринклатса пĕр-пĕринпе темĕн çинчен калаçса илнĕ пекех туйăнать. Часах вĕсем шăпланчĕç. Анчах пĕри çаплах ура çинче, ыттисем тĕлĕреççĕ-ха.

— Çакă çывăрса кайсанах малалла шăватпăр, — пăшăлтатрĕ Ваня.

— Шăплан! — айккинчен тĕртсе илчĕ юлташĕ.



## Словарь ĕçĕ

**утнă çĕрте утнă, чупнă çĕрте чупнă пек** — где-то шагом, где-то бегом

**хулпуççи урлă уртса яр** — перекинули через плечо

**чăпар вăрман илемĕ** — красота рябого леса

**çулçăсене чăштăртаттарса шăвакан калтасем** — ящерищы, шуршащие в листве

**шĕшкĕ тĕмĕ патне хырăмпа шуса каяр** — проползем по-пластунски до орешника

**вăрăм мăйлă тăрнасем** — длинношеие журавли

**тĕлĕрсе илесшĕн** — хотят вздремнуть
**пуçĕсене çуначĕсем айне чикрĕç** — спрятали голову под крыло
**пысăк çунаттисемпе хăлаçланкаласа илчĕç** — взмахнули большими крыльями
**пытанмалла вылянă пек** — будто играют в прятки
**пĕр-пĕринпе темĕн çинчен калаçса илнĕ пек** — будто переговоариваются между собой
**пĕри çаплах ура çинче** — здесь: один все еще на страже

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Калаври ĕçсем хăçан пулса иртнĕ?
2. Петьăпа Ваня ăçта кайнă?
3. Çанталăк мĕнле пулнă?
4. Юманлăхра ачасем мĕн пуçтарнă?
5. Вăрмантан тухсан ачасем мĕн курса тĕлĕннĕ?
6. Тăрна ушкăнĕ ăçта вĕçсе аннă?
7. Ачасене мĕншĕн тăрнасем *«пытанмалла выляна пек»* туйăннă?
8. Ачасем хумханни хăш йĕркесенче палăрать? Тупса вулăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Калаври *«чăпар вăрман илемĕ чуна илĕртет»* тенине эсир мĕнле ăнланатăр?

Ура çинче тăракан тăрна ачасен сассине илтрĕ пулас, кринклатса илчĕ. Çав вăхăтра хăйĕн çăварĕнчен темĕн чăмăркки тухса ӳкрĕ. Ыттисем пурте пуçĕсене çĕклерĕç, тавралăха тимлĕн сăнарĕç. Анчах кĕçех лăпланчĕç те пуçĕсене çуначĕсем айне чикрĕç. Ура çинчи тăрни çав-çавах тĕлĕрмерĕ-ха. Çĕрте выртакан чăмăрккана сăмсипе сăхса илчĕ те тавралăха тимлĕн сăнарĕ.

— Хуралçă иккен ку, — каллех сăмах хушрĕ Ваня.

Хуралçă тăрна каллех шĕшкĕ тĕмми еннелле пăхса илчĕ. Çак вăхăтра Петьăсен Кампур ятлă йытти вĕтлĕхрен сиксе тухрĕ те вĕре-вĕре тăрнасем патнелле ыткăнчĕ.

— Кампур, кил кунта! — кăшкăрчĕç ачасем.

Йытă чарăнмарĕ, малаллах ыткăнчĕ. Çакна пула тантăшсем ун хыççăн чупрĕç. Тăрнасем хушшинче шăв-шав çĕкленчĕ. Çунаттисемпе хăлаçланса вĕсем пĕрин хыççăн тепри йывăррăн çӳлелле вĕçсе хăпарчĕç. Хуралçă тарнă вара пуринчен кайран вырăнтан хускалчĕ. Вăл пĕр-ик метр пек çĕкленсен тин йытă чупса çитсе çӳлелле сикрĕ. Анчах кăлăхах пулчĕ. Кампур вара хӳрине выляткаласа Петьăпа Ваньăна хирĕç чупса пычĕ.

Ачасем киле хĕвел ансан тин çитрĕç. Вĕсем тӳрех Петьăсем патне кĕчĕç те кил картинче тăрмашакан аслашшĕне тăрнасем курни çинчене каласа пачĕç.

— Çапла, — терĕ аслашшĕ, — тăрнасем кашни çул тенĕ пекех кăнтăра вĕçсе кайнă чухне Ясмăк уйне ларса канаççĕ. Вĕсене эпĕ нумай сăнанă. Хăйсем нихçан та хуралçăсăр çывăрмаççĕ. Пĕри ялан хурала юлать. Вăл вара ыйха путас мар тесе çăварне чул катăкĕ хыпса тăрать. Çывăрса кайма

пуçласанах чул катăкĕ тухса ӳкет. Çав сасăпа ыттисем вăранаççĕ те хуралçа хăйсен чĕлхипе ятлама пуçлаççĕ. Айăпа кĕни вара чул катăкне хыпса малалла хураллать… Эсир курнă чăмăркка та чул катăкех пулнă ĕнтĕ вăл.

## Словарь ĕçĕ

**тавралăха тимлĕн сăна** — внимательно осмотерли местность
**шĕшкĕ тĕмми еннелле пăх** — взглянуть в сторонц орешника
**тăрнасем патнелле ыткăнчĕ** — помчалась к журавлям (собака)
**çунатсемпе хăлаçлан** — взмахнули крыльями
**ыйха пут** — заснуть
**шăв-шав çĕкленчĕ** — поднялся шум
**пĕрин хыççăн тепри** — друг за другом
**йывăррăн çӳлелле вĕçсе хăпар** — тяжело взвлетели
**хӳрине выляткала** — виляя хвостом
**хуралçăсăр çывăрмаççĕ** — без охраны не спят
**сасăпа вăран** — проснуться от звука

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Мĕншĕн ура çинче тăракан тăрна ыттисем пек тĕлĕрмен?
2. Тăрна ушкăнĕ пурте пĕр харăсах канаççĕ-и? Мĕншĕн?
3. Хуралçă тăрна çăварне мĕншĕн чул катăкĕ хыпса тăрать? Тупса вулăр.
4. Тăрнасен мĕн пирки каннă вырăнтан вĕçсе каймалла пулнă?
5. «*Йывăррăн çӳлелле вĕçсе хăпарчĕç*» тенине эсир мĕнле ăнланатăр? Мĕншĕн тăрнасем *«йывăррăн вĕçсе хăпарнă-ши»*?
6. Автор тăрнасене мĕнле кăмăлпа сăнлать-ши? Тупса вулăр.
7. Калава вуласа мĕн çĕнни пĕлтĕр?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Автор калавра мĕнле çивĕч ыйту (проблема) хускатнă?
2. Калавăн тĕп шухăшĕ мĕнле? Автор пире калав урлă мĕн каласшăн пулнă-ши?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Калавăн тĕп шухăшĕпе тӳр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр.*

1. Ĕç тăрантарать, кахал пăсать.
2. Усал хыпар — тӳр çулпа, ырă хыпар — çавра çулпа.
3. Калаканни маннă тет, итлекенни манман тет.
4. Упине тытиччен тирне ан сӳ.
5. Çут çанталăк — пирĕн тăван кил.
6. Кĕрхи çумăр каллех килет, çурхи çумăр çулпа иртет.

**Раиса Сарпи**
**(1951)**



***Раиса Сарпи (Раиса Васильевна Яковлева)*** *— чăваш сăвăçи. Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕнче, чăваш пукане театрĕн литература пайĕн ертÿçинче, «Пике» журналăн редакторĕнче, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ÿнер кафедрин аслă вĕрентекенĕнче ĕçленĕ. Поэзире кăна мар, драматургире те тивĕçлĕ ĕçлет. Раиса Сарпи Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премин лауреачĕ. Паллă произведенийĕсем: «Парне» (Подарок), «Розы в росе» сăвă кĕнекисем, «Асанне юмахĕсем» (Бабушкины сказки), «Пĕрремĕш утăмсем» (Первые шаги) сăвăласа çырнă пьесăсем.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Раиса Сарпи ăçта-ăçта вăй хунă?
2. Сăвăçăн паллăрах хайлавĕсене калăр.

## ТĂВАН ТАВРАРА

Шăнкăр-шăнкăр! Шăнкăр-шăнкăр!
Шăнкăртатса шыв юхать.
Шыв хĕрринчи çÿçе йывăç
Авăнайса çÿç ухать.
Йăлтăр-йăлтăр! Йăлтăр-йăлтăр!
Шыв çинче шевле вылять.
Сар хĕвелĕ ывăç-ывăç
Шевлине тăкать, кулать.
Ку вăл ăçти таврара?
Пурнăçра е юмахра?
Юмахра мар, пурнăçра.
Ку вăл пирĕн таврара,
Пирĕн савнă çĕр-шывра.

Вĕлтĕр-вĕлтĕр! Вĕлтĕр-вĕлтĕр!
Уй-хитре ăрша юхать.
Тулăх пулнă тырă-пулă
Тинĕс евĕр хумханать.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр! Вĕлтĕр-вĕлтĕр!
Шурă тутăр вĕлкĕшет.
Кермен евĕр çÿллĕ-çÿллĕ
Çурт хыççăн çурт çĕкленет.
Ку вăл ăçти çĕр-шывра?
Пурнăçра е юмахра?
Юмахра мар, пурнăçра.
Ку вăл пирĕн таврара,
Пирĕн савнă çĕр-шывра.

Пăлтăр-пăлтăр! Пăлтăр-пăлтăр!
Пурçăн аркă явăнать.
Сар хĕрпеле сарă йĕкĕт
Вăй выляса ал çупать.
Кăлтăр-кăлтăр! Кăлтăр-кăлтăр!
Кулă кустăрми чупать.
Шăнкăравлă авăк пĕкĕ
Асамат пек курăнать.
Ку вăл ăçти таврара?
Пурнăçра е юмахра?
Юмахра мар, пурнăçра.
Ку вăл пирĕн таврара,
Пирĕн савнă çĕр-шывра.

## Словарь ĕçĕ

**шăнкăртатса шыв юхать** — с журчанием бежит вода
**авăнайса çÿç ухать** — полощет в воде свои волосы
**шыв çинче шевле вылять** — на воде играют солнечные блики
**уй-хитре ăрша юхать** — играет в воздухе знойное марево
**шурă тутăр вĕлкĕшет** — мелькают белые платочки
**пурçăн аркă явăнать** — играют шелковые подолы
**сарă йĕкĕт** — добрый молодец
**кулă кустăрми чупать** — катится заливистый смех

**шăнкăравлă авăк пĕкĕ** — дуга с колокольчиком

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр, илемлĕ вуласа парăр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăвăра мĕн сăнланă? Каласа тухăр.
2. Сăвăри эпитетсене тупса палăртăр.
3. Сăвăра темиçе хут «*Ку вăл ăçти таврара? Пурнăçра е юмахра*?» тесе ыйту лартать те сăвăçă «*Юмахра мар, пурнăçра. Ку вăл пирĕн таврара, пирĕн савнă çĕр-шывра*» тесе хăех хуравлать. Темиçе хут пĕтĕмлетӳ туса сăвăçă тăван тавралăха мĕнлерех кăтартса парасшăн-ши?
4. Сăвăри евĕрлев сăмахĕсене (подражательные слова) тупăр. Вĕсем мĕне евĕрлеççĕ — сасса е сăнара? Автор вĕсене мĕн тĕллевпе усă курнă-ши?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Тăван тавралăх çинчен мĕнле хайлавсем пĕлетĕр? Каласа тухăр.
2. Хăш çыравçă хăйĕн хайлавĕсенче ытларах тăван тавралăх темине хускатнă?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсем лартса ваттисен сăмахĕсене вулăр.*

1. Шывăн … çук.
2. Çилсĕр çил … авăрмасть.
3. Вăрман пек пуянни çук, хир пек … çук.
4. Вут пек вăйли çук, çил пек … çук.
5. Çумăр йĕпетсен те … типĕтет.

а) асли
ă) хĕвел
б) арманĕ
в) усалли
г) турат

## Ӳнер тата сăмах тĕнчи

Вуланă сăввăн пĕр сыпăкне суйласа илсе унăн ӳкерчĕкне тăвăр.



### Николай Сладков
### (1920 – 1996)

***Николай Иванович Сладков*** *— вырăс çыравçи. Ачаранах çут çанталăк илемĕпе киленме юратнă, çамрăк чухне сунара çӳренĕ. Каярах сунар ĕçне çут çанталăка фото ӳкерес ĕçпе ылмаштарнă. Топограф пулса ĕçленĕ. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă. Вăл 60 ытла кĕнеке авторĕ. Николай Сладков Н.К. Крупская ячĕпе хисепленекен Патшалăх премине тивĕçнĕ. Сыравçăн паллăрах*

*кĕнекисем: «Серебряный хвост», «Азбука леса», «Смелый фотоохотник», «Иду я по лесу». Николай Сладков хăйĕн хайлавĕсенче çут çанталăка сыхлама чĕнсе çырать.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

Николай Сладкова çут çанталăк çинчен çырма мĕн хистенĕ-ши?

## ВĂРМАН ÇЫВĂРАТЬ

*Калав*

Шăнса хытнă çап-çара та чĕмсĕр вăрман. Хĕллехи ыйхăсен тапхăрĕ пуçланчĕ. Вăрманта чĕрĕпсем, пурăшсем, упасем тутлă ыйхăра халь. Йывăçсен те çывăрма вăхăт çитнĕ. Чăрăшсемпе хырсен те, йĕплĕ чĕрĕпсем пекех, çывăрас пулать. Çулçăллă ăвăссен, хурăнсен, çирĕксен те, çăмламас упасем евĕр, тутлă тĕлĕксем курмалла.

Хĕллехи çирĕп ыйхăпа çывăраççĕ йывăçсем.

Çулçăллисем çывăрма выртиччен салтăннă, лăсăллисем тумтирĕсене хывмасăрах тĕлĕрсе кайнă. Мĕн тăхăннă, çавăнпах çывăраççĕ. Ура çине тăрса, тумтирĕпе.

Çулçăллă кашни йывăç çывăрма хăйне майлă хатĕрленнĕ. Юман, сăмахран, малтан çĕлĕкне хывса пăрахнă, тирек вара – йĕмне. Хурăнсем ылтăн блузкисене хывнă, авăссем – хĕрлĕ кофтисене, çирĕксем – симĕс кĕписене.

Салтăннă, пăшăлтатса калаçнă, çӳçенсе илнĕ, вара шăпланă та тĕлĕрсе кайнă. Халĕ ĕнтĕ пĕр вăранмасăрах çуркуннеччен çывăраççĕ, хĕл каçасси йывăççене çĕр каçасси пек çеç туйăнать.

Йывăççем çуркунне вăранĕç те хĕвел еннелле туртăнĕç, хуллен тумланма тытăнĕç. Чи малтан хурăнсем тумланса пĕтереççĕ, чи кайран – юмансем. Тумланаççĕ те калаçма тытăнаççĕ. Çĕрле те, кăнтăрла та калаçаççĕ, хĕл каçиччен чĕнмесĕр ларнине çапла саплаштараççĕ. Хĕлле мĕн курнине пĕр-пĕрне çу каçиччenех каласа параççĕ.

Çу кунĕсем хăвăрт иртсе каяççĕ. Чăштăртатса тăраниччен хĕл тепĕр хут килсе çитет. Каллех салтăн та çывăрма пуçла. Çу каçиччен пĕр-пĕринпе пуплеççĕ те ĕнтĕ, симĕс чĕлхисем чĕтресе кăна тăраççĕ.

*В. Игнатьев куçарнă*

## Словарь ĕçĕ

**шăнса хытнă çап-çара та чĕмсĕр вăрма** — окоченевший, голый и безмолвный лес

**хĕллехи ыйхăсен тапхăрĕ** — период зимних снов

**хĕллехи çирĕп ыйхăпа çывăр** — спать крепким зимним сном

**çулçăллисем çывăрма выртиччен салтăннă** — лиственные перед сном разделись

**лăсăллисем тумтирĕсене хывмасăрах тĕлĕрсе кайнă** — хвойные уснули, не раздеваясь

**мĕн тăхăннă, çавăнпах çывăраççĕ** — во что были одеты, в том и спят

**çӳçенсе илнĕ** — поежились

**пĕр вăранмасăр** — беспробудно, не просыпаясь

**хĕл каçасси йывăççене çĕр каçасси пек çеç туйăнать** — зима им кажется не более одной ночи

**хуллен тумланма тытăнĕç** — медленно начнут одеваться

**хĕл каçиччен чĕнмесĕр ларнине çапла саплаштараççĕ** — так они возмещают то, что не беседовали всю зиму

## ЫІйтусемпе ĕçсем:

1. Калав мĕн çинчен?
2. Калавра хăш чĕрчунсем пирки тутлă ыйхăра тенĕ? Мĕншĕн?
3. Сыравçă хăш йывăççене чĕрĕпсемпе танлаштарать?
4. Çулçăллисем мĕнле çывăрма выртнă? Лăсăллисем — мĕнле?
5. Йывăççсем мĕнле çывăрма хатĕрленнĕ? Тупса вулăр.
6. Çуркунне чи малтан хăш йывăççсем вăранаççĕ, хăшĕсем — чи кайран?
7. *«Хĕллехи çирĕп ыйхăпа çывăраççĕ йывăççсем»,* — тесе çырать çыравçă. Эсир ăна мĕнле ăнланатăр? Йывăççсем те çывăраççĕ-и?
8. Автор çывăракан вăрмана мĕнле кăмăлпа сăнлать-ши? Каласа парăр.

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Хăш-хăш йывăç хĕлле тумне хывмасть?
2. Çуркунне хăш йывăç чи малтан тумланма тытăнать, хăшĕ — чи кайран?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Панă сăмахсенчен ваттисен сăмахĕ пуçтарăр.*

Çути, ансан, хĕвел, те, хаклă, хĕвел.

### АХРĂМ
*Калав*

Вăрманта аташса кайрăн пулсан эй-эй-эй! тесе кăшкăр. Кам та пулин хирĕç сас париччен кăшкăр. Вăрманта кăшкăрни аякран илтĕнет. Эсĕ эй-эй-эй! тетĕн, сана хирĕç кам та пулин çавнашкалах сас парать. Е ахрăм каялла çаврăнса килет. Ку лайăх япалах мар вара. Ун пек чухне эсĕ хăвăнпа ху çеç кăшкăрса калаçатăн.

Утатăн-утатăн, ялан пĕр еннелле каятăн. Каярахпа пăхатăн та — каллех малтанхи вырăна килсе тухнă! Акă эсĕ пaçăр ларнă тунката. Эсĕ çав тунката патĕнчен ним пăрăнмасăр малалла тӳррĕн утнăччĕ. Ху вара тепĕр самантран каллех ун патне килсе тухрăн. Тункати чăннипех çавă, мĕншĕн тесен пaçăр çинĕ канфет хучĕ те çаплах выртать авă…

Каллех çак вырăнтан тапранса тӳп-тӳрĕ утатăн, анчах сисместĕн те — татах сан умăнта палланă тунката! Канфет хучĕ те çаплипех выртать. Нимĕн

те ăнланаймастăн, хăранипе çан-çурăм сăрăлтатма тытăнать. Шурса кайнăскер, эсĕ унталла пăхатăн, кунталла. Вăрман вăрманах ĕнтĕ: тункатасем, тŷннĕ йывăççем. Анчах сана майĕпен кунта темле пытанса ларнăскерсем пек туйăнма тытăнаççĕ, чăрăшсем те сивлеккĕн курăнаççĕ, ăвăссем вăрттăн йăшăлтатса кашлани те чуна шиклентерет.

Кĕтмен çĕртен аякра-аякра такам кăшкăрни илтĕнсе каять. Эй-эй-эй! Хирĕç кăшкăрса яратăн эсĕ. Ху вара çын кăшкăрнă еннелле вирхĕнетĕн. Кăшкăрни каллех вăйсăррăн илтĕнет, эсĕ çав сасса çухатас марччĕ тесе ун еннелле чупатăн.

Сасă çывăхрах илтĕнме тытăнать, эсĕ ĕнтĕ малтанхи пекех хыпăнса чупмастăн, кăштах сывлăш çавăрса янăскер, малалла шанчăклăрах васкатăн. Пĕлетĕн: эсĕ çăлăннă халь! Ăшунта çеç хăрани иртсе кайман-ха сан, аллу-уру чĕтреме пăрахманнине те сиссех тăратăн.

Çак кунтан пуçласа вăрманта эй-эй-эй! тесе кăшкăрасси саншăн выляса кăшкăрасси шутланма пăрахать вара. Эсĕ ĕнтĕ малашне шŷтлесе-кулса мар, çăлăнăç шыраса е çынна пулăшасчĕ тесе çеç кăшкăратăн. Путакан çынна тĕксĕм шыва çăлăнмалли çаврашка пăрахса параççĕ. Эй-эй-эй! сасса та вăрманта малашне эсĕ çав пĕлтерĕшпе янрататăн. Ху вара пĕрремĕш хут мĕнле аташса кайнине, епле ăшталанса чупнине, сехĕрленсе кăшкăрнине, хирĕç ахрăм çеç çаврăнса килнине тата çавна май йывăç тăррисем лăпкăн кăна кашласа ларнине чылайччен манаймасăр пурăнатăн.

*В. Игнатьев куçарнă*

## Словарь ĕçĕ

**аташса кайрăн** — заблудиться
**хирĕç сас паричченех** — пока не откликнется
**хăранипе çан-çурăм сăрăлтатма тытăнать** — от страха по телу пробежали мурашки
**хыпăнса чупмастăн** — не бежишь задыхаясь
**кăштах сывлăш çавăрса янăскер** — успел отдышаться
**çăлăнăç шыраса** — в поисках спасения
**ăшталанса чуп** — метаться
**сехĕрленсе кăшкăрнине** — кричать перепугавшись
**ахрăм** — эхо

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Çут çанталăк çинчен калакан ваттисен сăмахĕсем калăр. Калавăн тĕп шухăшĕпе тŷр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр.*

**КАМ ÇĔР–ШЫВА ЮРАТАТЬ, ВĂЛ ТĂШМАНА КУРАЙМАСТЬ — КТО ЛЮБИТ РОДИНУ, ТОТ НЕНАВИДИТ ВРАГОВ**




«Пурте – фронтшăн, пурте – çĕнтерӳшĕн!» — çапла пулнă ун чухнехи лозунг. Тăван çĕр-шыв пурне те ура çине тăма чĕннĕ.

1941-1945 çулсенчи аслă вăрçăра ытти халăхсемпе пĕрле чăваш халăхĕ те чăн-чăн паттăрла çапăçнă, хăйĕн çирĕп кăмăлне, чăтăмлăхĕпе хăюлăхне, Тăван çĕр-шыва чун чĕререн юратнине кăтартнă.

Халăхпа пĕрле çыравçăсем те тăшмана хирĕç кар тăрса çапăçнă. Вĕсенчен пĕрисем вăрçă хирĕнче выртса юлнă, теприсем аманса е чĕрĕ-сывă киле таврăннă.

Çыравçăсем Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи çинчен сахал мар хайлавсем çырнă. Çак хайлавсенче салтак чунĕпе характерĕ, çĕр-шыв ирĕкĕшĕн пуçне хунă çынсен юнĕ çĕре ахаль ӳкменни çинчен калаççĕ. Хайлавсенче çыравçăсем «Паттăр ĕç тăвакан, йывăрлăха сирекен çын чунĕпе мĕнле-ши?» – йышши ыйтусем çине хуравлаççĕ.

**ÇĔНТЕРӲÇĔ САЛТАКА**

Майăн 9-мĕш палăк пулнишĕн,
Халăха вăл хавaслăх кӳнишĕн,
Паян пур хулара, пур ялта
Çĕкленсе шăранан чун юрришĕн
Тав сана, çĕнтерӳçĕ салтак!

Савнăç, ырлăх туллишĕн, телейшĕн,
Чĕрери, тӳпери сар хĕвелшĕн,
Кайăк-кĕшĕк кĕввишĕн тата
Садсенчи, куçсенчи чечексемшĕн
Тав сана, çĕнтерӳçĕ салтак!

*Г. Орлов*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. «Çĕнтерўçĕ салтака» сăввăн авторĕ кам? Эсир унăн хăш хайлавĕсене пĕлетĕр?
2. Г. Орлов Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă-и?
3. Г. Орлов ытларах мĕн çинчен çырнă?

## Словарь ĕçĕ

**кайăк-кĕшĕк кĕвви** — пение птиц
**хаваслăх кўни** — то, что доставляет радость
**тав сана, çĕнтерўçĕ салтак** — поклон тебе, солдат-победитель

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Илемлĕ вулама вĕренĕр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Автор сăвва кама халалланă?
2. Çĕнтерўçĕ салтака сăвăçă мĕншĕн-мĕншĕн тав тăвать? Кластер туса хуравлăр.
3. «*Майăн 9-мĕш палăк пулнишĕн,*
   *Халăха вăл хаваслăх кўнишĕн*», — сăвă йĕркисене мĕнле ăнланатăр?

## Халăх ăс-хакăлĕ

*Ваттисен сăмахĕсен пуçламăш пайне тупăр. Сăввăн тĕп шухăшĕпе тўр килекен ваттисен сăмахĕсене палăртăр:*

… — çапăçура çуралаççĕ.
… малтан шухăшлас пулать.
… хăвна та усал тумĕç.
…, вăл тăшмана кураймасть.
…, чысна ан çухат.

### ХĔРĔХ ПĔРРЕМĔШСЕМ

Хĕрĕх пĕрремĕшсем,
Хĕрĕх пĕрремĕшсем,
Вăрçăпа ăмăртса
Çутă кун курнисем,
Хĕрĕх пĕрремĕшсем,
Хĕрĕх пĕрремĕшсем,
Аллăри салтаксем,
Çулăмри пепкесем.

Тав сире, аттесем,
Тав сире, аннесем.
Çухатмарĕç чысне
Хĕрĕх пĕрремĕшсем.
Выçлăха çĕнтерсе,
Шанчăка ўстерсе
Ăмăрт кайăк пекех
Çунатланчĕç вĕсем.

Çут тĕнче уçлăхне,
Сĕм тайга чăтлăхне

Çул хываççĕ паян
Пуç усми тантăшсем.
Хĕрĕх пĕрремĕшсем,
Хĕрĕх пĕрремĕшсем,
Эсир аслă çĕр-шывăн
Чăн-чăн ачисем.

Хĕрĕх пĕрремĕшсем –
Халь хăйсем ашшĕсем.
Хĕрĕх пĕрремĕшсем -
Халь хăйсем амăшсем.
Таврана кисретсе
Вут ан хыптăр тесе
Тăрăшаççĕ чунтан
Хĕрĕх пĕрремĕшсем.

*Ю. Сементер*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. «Хĕрĕх пĕрремĕшсем» сăввăн авторĕ кам? Эсир унăн хăш хайлавĕсене вуланă?
2. Ю. Сементер хăçан çуралнă? Вăл Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине хутшăннă-и?

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн партитурине тăвăр. Илемлĕ вулама вĕренĕр.

## ЫҪйтусемпе ĕçсем:

1. Автор камсене «Хĕрĕх пĕрремĕшсем» тесе калать? Кластер туса хуравлăр.
2. *«Çут тĕнче уçлăхне, Сĕм тайга чăтлăхне Çул хываççĕ паян…»,* — тесе çырать сăвăçă. Камсем пирки çырать-ши вăл? Чăвашран тĕнче уçлăхне вĕçнĕ космонавтсем пур-и? Камсем?
3. Хĕрĕх пĕрремĕшсем халĕ мĕншĕн тăрăшаççĕ?
4. Сăвва мĕншĕн «Хĕрĕх пĕрремĕшсем» тесе ят панă?
5. *«Выçлăха çĕнтерсе,*
   *Шанчăка ÿстерсе*
   *Ăмăрт кайăк пекех*
   *Çунатланчĕç вĕсем»,* — сăвă йĕркисене мĕнле ăнланатăр?

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи миçемĕш çулта пуçланнă, миçемĕш çулта вĕçленнĕ?
2. Вăрçă вĕçленнĕренпе миçе çул иртрĕ?
3. Вăл вăрçăра сирĕн тăванусенчен кам та пулин пулнă-и? Камсем?
4. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă чăваш çыравçисене хăшĕсене пĕлетĕр?
5. Эсир вăрçă çинчен мĕнле кĕнекесем вуланă, мĕнле кинофильмсем пăхнă?

**Муса Джалиль**
**(1906 - 1944)**



***Муса Джалиль (Муса Мустафович Залилов (Джалилов))*** *— тутар халăх сăвăçи, журналист, çар корреспонденчĕ. Тутар ача-пăча журнал редакторĕнче, «Коммунист» тутар хаçатĕнче, Тутар опера театрĕн литература пайĕнче вăй хунă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă, тыткăна лекнĕ. Моабит тĕрминче вăл сăвăсем çырнă. 1944 çулта ăна персе пăрахнă. Муса Джалиль çырнă сăввăн ал çырăвĕсене пленра пĕрле пулнă салтак илсе тухнă. Моабит тĕрминче çырнă сăвă ярăмĕ «Моабит тетрачĕ» (Моабитская тетрадь) ятпа пичетленсе тухнă. Муса Джалиль Совет Союзĕн Паттăрĕ ята тивĕçнĕ.*

## Хăвăра тĕрĕслĕр

1. Муса Джалиль хăш халăхăн сăвăçи?
2. Мĕншĕн вăл çырнă сăвă ярăмĕ «Моабит тетрачĕ» ятпа пичетленсе тухнă?

### УРАСĂР

*«Моабит тетрачĕ» кĕнекерен*

Эп таврăнтăм! Тăванăм, алă пар!
Ан тив, урасăр… Пурпĕр савăнар.
Усал тăшман хăйне пуççапманран
Ятарласа тĕллерĕ ураран.

Çапса антарчĕ минăпа персе.
— Аха, пуççапрăн! — терĕ шăл йĕрсе.
Анчах сехри ун хăпрĕ çавăнтах:
Эп тăтăм талпăнса — урасăрах!

Тăшман нихçан тăваймĕ хăй айне
Эс пур çинче, тăванăм — Çĕр-анне!
Халран кайсан тытатăн алăран, —
Вара çич хут эп вăйлă çич ютран.

Пĕр пуç тавра вун пилĕк хĕç вылять,
Йăваннă çын каллех сиксе тăрать.
Пĕрин алли çитмест, теприн — ури,
Пулмастпăр пурпĕрех тăшман хурри.

Эп таврăнтăм! Тăванăм, алă пар!
Урасăр çав… Ан макăр… Кирлĕ мар…
Чыса, чуна çитертĕм эп тасан, —
Пурнать этем чун-чысĕ сыв пулсан!

*Митта Ваçлейĕ куçрнă*

## Словарь ĕçĕ

**ан тив, урасăр** — пусть без ноги
**хăйне пуççапманран** — за то, что не поклонились врагу
**ятарласа тĕллерĕ ураран** — специально целился в ногу
**çапса антар** — сбить
**çич ют** — враг
**сехри ун хăпрĕ** — он испугался, у него душа ушла в пятки
**тăтăм талпăнса** — встал с натугой
**халран кай** — обессилеть
**хĕç вылять** — звенят сабли
**пулмастпăр пурпĕрех тăшман хурри** — не потепим обиду врага

## Хăвăра тĕрĕслĕр

*Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле термин пытаннă-ши?*

**…** — образ поэта (его лирическое «Я»), чьи переживания, мысли и чувства отражены в лирическом произведении.
**…** — сăвăçăн лирикăри сăнарĕ; автор ăнланулăхне уçса памалли мелсенчен пĕри.

## Илемлĕ вулама хăнăхатпăр

Сăввăн 2 строфан партитурине тăвăр. Илемлĕ вулама вĕренĕр.

## Ыйтусемпе ĕçсем:

1. Сăввăн авторĕ кам? Вăл хăш халăхăн сăвăçи?
2. Лирикăлла герой ăçтан таврăннă?
3. Вăл мĕншĕн урасăр? Тупса вулăр.
4. Урасăр пулсан та «савăнар», «ан макăр» тет лирикăлла герой. Мĕншĕн-ши?
5. Лирикăлла героя Тăван çĕр вăй-хал парса тăни сăввăн хăш йĕркисенче палăрать? Тупса вулăр.

# ВĔРЕННИНЕ ПĔТĔМЛЕТНИ

1. *Чăвашла тата вырăсла терминсен тӳр килĕвĕсене тупăр.*

| | |
|---|---|
| 1) Тĕрленчĕк | а) Речевая характеристика |
| 2) Калав | ă) Сказка |
| 3) Пуплев характеристики | б) Зарисовка (заметка) |
| 4) Сăвă | в) Рассказ |
| 5) Юмах | г) Стихотворение |

2. *Тĕслĕхсенчи хайлавсенчен хăшне К.В. Иванов çырман?*
   а) «Нарспи»
   ă) «Икĕ хĕр»
   б) «Вилĕме улталани»

3. *Хайлавсен авторĕсене палăртăр.*

| | |
|---|---|
| «Çарăк» сăвăлла юмах | Константин Иванов |
| «Икĕ хĕр» сăвăлла юмах | Петĕр Хусанкай |
| «Таната» роман | Геннадий Волков |
| «Кайăк тусĕ» повесть | Мĕтри Кипек |
| «Этнопедагогика» кĕнеки | Хветĕр Уяр |

4. *Петр Киприсов картинин тĕрĕс ятне палăртăр:*



1) Улахра.
2) Çеçпĕл Мишши улаха килни.
3) К.В. Иванов юрă итлет.
4) Хăнара.

5. *Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.*

1) Чăваш халăхĕн (а) _______ тупаканни вăл — (ă)_________, пирĕн мухтавлă çутта кăлараканăмăр.

Вăл 1868 çулта Чĕмпĕрте (б)_________ уçнă, кайран чăваш (в)_________ тунă, чăвашсен малтанхи кĕнекине, «Чăваш букварьне», çырса хатĕрленĕ.

Çакă (г)_______ ĕнтĕ пирĕн халăхăн Ылтăн кĕнеки.

*(Юхма Мишши «Ылтăн кĕнеке» тĕрленчĕк сыпăкĕ)*

<u>*Суйламалли вариантсем*</u>*:*

а) Журналне, Ылтăн кĕнекине, хаçатне, сумкине, тум-тирне.

ă) Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, И.Максимов-Кошкинский, Иван Яковлевич Яковлев, Геннадий Волков.

б) Чăваш шкулне, Культура керменне, больницине, çуртне, стадионне.

в) юманлăхне, пултарулăхне, çырулăхне, ачалăхне, çамрăклăхне.

г) «Хыпар», «Чăваш букварĕ», «Нарспи», «Салампи», «Тăван Атăл».

2) — Мĕн, Терене ăмсанатăн-и? — йĕкĕлтенĕ пек (а) _______ анне.

— Тупнă (ă)_________, — терĕ атте. — (б)_________ … шурă юр çинчен хăмăррăн курăнать… Ытла та çăмăл. Чăнах, (в)_________ те ӳкер. Чăн-чăн (г)_______ çапла хăтланать-и? Халĕ мулкачсем хĕл ир ларнăран тумне хывса ĕлкĕреймен. Уншăн хайсем те пăшăрханаççĕ ĕнтĕ. Акă мулкачăсем (д)_________ улăштарччăр-ха, шуралччăр, вара сунара кайăп та. Сунарçă вăл мулкачă тытакан çеç мар, ăна (е)_________ те пулма тивĕçлĕ.

*(Г. Ефимов «Тумне хывма ĕлкĕреймен» калав сыпăкĕ)*

*Суйламалли вариантсем:*

а) вуласа пачĕ, каласа хучĕ, чупса тухрĕ, юрласа ячĕ, сиксе тухрĕ.

ă) куллянмалли, çырмалли, юрламалли, ташламалли, ăмсанмалли.

б) Хе, Ух, Хаш, У-у-у!, Ах.

в) юрла, сыхла, пер, ывăт, выля.

г) сунарçă, пулăçă, ӳнерçĕ, пахчаçă, кăмакаçă.

д) аллине, урине, тумне, пушмакне, кĕрĕкне.

е) чупаканĕ, суяканĕ, итлекенĕ, упраканĕ, вăрçаканĕ.

6. *Сăвăсене вуласа тухăр, темине палăртăр.*

Тăрăшса ăс-тăн паратăн кунсерен,
Кашнине ыр пурнăç çулĕ парнелен.
Çавăнпа кун-çул илемлĕ,
Çавăнпа эпир телейлĕ, —
Тавтапуç сана, учитель, чĕререн. *(Г. Юмарт)*

2) Тăван çĕр-шыв тесессĕн
Куç умне
Тухать çу кунĕ: тулăх хир, ĕшне…
Тăрăслатса сикеççĕ путексем,
Ĕçе тухаççĕ юрласа хĕрсем, —
Çак мар-и вăл хитрелĕх, тăвансем?
*(А. Галкин)*

7. *Çак йĕркесен авторĕсем камсем?*

1) Юлташпа эс пул юлташ,
Усалпа эс ан паллаш.
Тăшманпа ан пул йăваш,
Çывăр, Аптраман тавраш!

2) Е çĕлеме ларать те,
Çĕвви шăрçа пек пулать —
Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă
Пĕр кĕрет те пĕр тухать.

3) Аннене суйламаççĕ,
Ма тесен вăл — пĕрре.
Аннене хурламаççĕ —
Вăл çуратнă пире.

4) Çак çĕре эсир пĕлетĕр-и:
Ватă та вăл, ĕмĕр çамрăк та.

Ăсан туйĕ хӳхĕм çав тери — Курсан чун киленĕ вăрманта.
*Вариантсем:* А. Смолин, К. Иванов, Г. Волков, П. Хусанкай, Трубина Мархви.

8. *Пană йĕркесене вуласа тухăр, хайлав жанрне палăртăр.*

«Тăван çĕршыв, Тăван çĕршыв,
Асран кайми юратнă çĕршыв.
Тăван çĕршыв, Тăван çĕршыв,
Мухтав сана, çуралнă çĕршыв!»

а) юптару ă) сăвă б) гимн

9. *К. Иванов çырнă «Нарспи» хайлав жанрне палăртăр.*

а) юмах
б) юптару
ă) поэма
в) калав

10. *Хăш сăввине П.П. Хусанкай çырнă?*

а) «Анне — пирĕн тĕнче»
ă) «Чăвашла»
б) «Тăван таврара»
в) «Йыхрав»

**ТУПМАЛЛИ**
**СОДЕРЖАНИЕ**

Халăх сăмахлăхĕ — Устное народное творчество …………………….
Пĕлĕве сутăн илеймĕн — Знание за деньги не купишь ………………..
Кĕрхи çанталăкăн кăмăлĕ хуçăк — Осень – погоды перемен восемь …
Литература юмахĕсем — Литературные сказки …………………….
Тăван чĕлхе — эс чи пахи — родной язык — святой язык ……….
Тăван кил — ылтăн сăпка — родной дом — золотая колыбель ….
Усал ĕçпе ырă ят илеймĕн — Без добрых дел не будет и доброго имени...
Ĕç çынна илем кӳрет — Труд красит человека …………………………….
Чăваш халăх пултарулăхĕ, йăли-йĕрки — Обычаи и традиции чувашского народа ………………………………………………..
Çурхи кун – капăр — Матушка весна всем красна ………………………….
Кашни кайăк хăй йăвине савать — Всякий кулик своё болото хвалит ….
Çут çанталăк – пирĕн тăван кил — Природа – наш дом ……………….
Кам çĕр-шыва юратать, вăл тăшмана кураймасть — Кто любит Родину, тот ненавидит врагов ………………………………………………………
Вĕреннине пĕтĕмлетни ………………………………………………………

